Чебоксарский
Ц. Б. [illegible] Публичного
О

Пётём тёнчери пролетарисем, пёрлешёр!

1938
НОЙАБЁР
2
ПУНКУН
253(5066) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мёш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомёпе Чăваш АССР Верховнăй Совечён хаçачё. Пёр №-рё 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСЁ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, рел. заместитёлён—3—97, редакци секретарён—4—40, парти пурнăç пайён—0—85, йăлахуçăлăх пайён — 4—97, советсен тайён—0—88, промышленнăç пайён—7—97, йăлкорсен пайён—2—30, демурнăйăн — 6—23.

Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатмала тата тёреклетмеле

Октябёрти Аслă революцин пулин тенёр пилёк кунтан 21 çул тултарать. Ленин—Сталин партийё унăн Тёнкомё, халăхăн ăратна çунăçё Сталин йăлтаки йертсе пынипе, пирён совет çёршывё çак çирёмпёр çул хушшинче пит те пысăк çёнтерӳсем турё. Совет Союзён халё социализмăма хуçалăх, лайăх хăнăрах-савăтсем, боль шевикла колхозсем пур. Епёр социализмсем туса çитреттёмёр. Телейлё те савăнăçлă нумăнат халё пирён совет халăхё ирёклё çёршывра.

Совет халăхё хăйён тăван çёршывне вёçёмсёр йăратать. Савăнпа та вăл пётём вăйпан çёршывăн чапёшён, мухтавёшён кёрешет, оборона вăй-хăватне, тёрекне ӳстересшён тăрашать.

Пирён çёршыв тавра пур ёнчен те капиталисăмлă государствăсем тăрассё. Фашисла агрессăрсем пире йунăççё, пирён çине вăрçăна тухма хатёрленеççё.

Савăнпа та Совет Союзён ёççынийёсем Сталин йăлтаки: „Хăмăрăн Хёрлё Çара Хёрлё Флота, Хёрлё авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатмала та тёреклетмелеч",—тесе калаппине йăланах аслă тытса тăрассё. Çакна шута илсе, ёççынисем производствă ёçёнчен татăлмасăр Осоавиахим организацисенче çар ёçне—сывлăшри химилё тапăнуран сыхланма, пăшалпа пеме, самолётсемпе вёçме, топографи ёçне тата ыт. те вёренеççё. Вёçем Ленин — Сталин партийё пёре чёнёсенех сывлăмашкăн кар тухма хатёрленеççё.

Осоавиахимăн тёп задачи—ёççынисен йышлă массисем хушшинче çар ёçне вёренессине йёркелесси пулать. Çак тёлёшпе пирён Осоавиахим организацисем пысăк ёççем туса пыраççё. Осоавиахим — Хёрлё Çар резерви. Вăл Хёрлё Çар валли çар ёçне пёлекен сывлăхлă çамрăксем вёрентсе хатёрлет, пирён хăнăрах-савăтсене, колхозсене оборонă крепăçё тăвассишён ёçлет.

Халё Осоавиахим организацисенче члён билечёсене уйăлтарас ёç пырать. Осоавиахим билечёсене уйăлтарни Осоавиахим организацийёсен пётём ёçне вăйлатма, Осоавиахим членёсен активлăхне ӳстереме пулăшмалла.

Çак ёçе тивёçлине йёркеленё çёрте чăвахах та Осоавиахим организацисен ёçё çăйăхланса пыни палăрать. Куславкка, Шупашкар, Шăнкăртам, Шăхасан районёсенче, пётёмпёне илсен, Осоавиахим билечёсене уйăлтарса пётёрнё те ёнтё.

ОАХ билечёсене уйăлтарма пуçланăранпа, йăлăн 1-мёшёнчен пуçласа, республикăра Осоавиахим организацине çёнёрен 7.246 çын кёнё. Куславкка районёнче (районăн председательё Сидоркин йăлтаки) билетсене уйăлтарăр вăхăтра Осоавиахим организацине çёнёрен 400 çын хутшăннă. Çар ёçне вёренес майпа икё хутчен тактикăлă вăйăсем туса иртернё. Унта Осоавиахим членёсем 700 çынна йăхăн пулнă.

Çёршыв йăлхуçалăх техникумёнчи Осоавиахим организацийё. Осоавиахим билечёсене уйăлтарма май, Октябёр уйăвне хатёрленес йёркене, çар ёçне вёрентеми кружоксем организацилене. Заçатисен ячерне икё хут пулса иртеççё.

Пăшалпа тёл пеме вёренмели кружок членёсеннен 15 çын „Ворошиловский стрелок" значокне илнё. Октябёр уйăвё тёлне ку значока илме 24 çын хатёрленеççё. Савăн пекех Осоавиахим йăнёне тараканă колхозра та (Йелячёк р.) çар ёçне вёренессине лайăх йёркеленё. Унта икё кружок—сывлăшри химилё тапăнуран сыхланма вёренмели тата санитари обороннине вёренмели кружоксем ёçлеççё. Шупашкарпа Сёрпӳ хулисенчи колхозницёсем çар ёçён пёр-пёр специальăçне вёренессине пуçларса йăнă.

Çапла пулин те, пирён республикăра оборонă ёçё çителёклё пырать, тесе калама çук-ха. Чылай районсенче Осоавиахим организацийёсем йăнăх ёçлеççё. Осоавиахим билечёсене уйăлтарас ёç республикăра вăрăххăн пулса пырать. Уйрăмăнах ку ёç Патăрйел, Ишлей, Канаш, Трак тата Тăвай районёсенче интех те йăнăх. Вăл районсенче Осоавиахим билечёсене уйăлтарассине массала-йндантару ёçёне, çар ёçне вёренессине сыхăнтарса пымаççё.

Чăваш АССР ОАХ Тёп Совечё Осоавиахим пуçламёш организацисене çителёклё йертсе пымасть. ЧАССР-ОАХ Тёп Совечён октябёрён 25—27-мёшёсенче пулнă пленумё ун çине уйрăмăнах кăтартса хăварчё. Анчах çакăнтах çакна каласа хăварас пулать: пленум хăй ёçёнче йăнăшсем те тунă, вăл ОАХ Тёп Совечён президиумё членёсене тивёçлё сăлтавсăрах, пурне те тенё пекех, политика тёлёшенчен шанчăксăра кăларас çул çине тăнă.

Шавлани мар, халăх ташманёсемпе кёрешес ёçе, сăтăрла ёçсен йăлашкийёсене пётерес ёçе тивёçлине боль шевикла йёркеленё çирёп.

Осоавиахим Тёп Совечё оборонă ёçёнчи сăтăрла ёçсен йăлашкийёсене пётерес тёлёшне нимех те туман-ха. ОАХ Тёп Совет пайёсем мтах та начар ёçлеççё, вёçем вырăнти организацисенчен уйăрласа кайнă. Çавна пулах ёнтё Турхан районёнче Осоавиахим пуçламёш организацийёсен хисепё чакнă. Хёрлё Чутай районёнче чылай пуçламёш организацисем (Пăнтăк, Купёш, Акшкасси, Васка Сырми т. ыт. те) хут çинче кăна шутланаççё. ОАХ райсоветё пуçламёш организацисене тирпейлё йертсе пымасть. Райсовет руководстви час-часах улшăнса тăрать.

Комсомол—Осоавиахимăн чунёпе чёри пулса тăрать. Çапла пулин те комсомол организацисем чылай çёрте ОАХ организацисене тивёçлине пулăшмаççё.

Партипе профсойуз организацисем те чылай çёрте оборонă ёçёпе сахал интересленеççё.

Чăваш парторганизацин XIX-мёш конференцийё çапла йышăнса хăварчё:

„Конференци уйрăмăнах çакна палла тăвать: Совет Союзё çине вăрçăна тапăнас хăрушлăх пёрмăйах ӳсе пыракан условисенче коммуниссем, пурнăчен малтан, парти активё çар ёçне вёренеси кирлё пулса тăрать, çавăнпа та конференци пур парторганизацисене те пётём оборонă ёçне йертсе пырассине тёпрен лайăхлатма, оборонă тата физкультура организацисен — Осоавиахим, РОКК, физкультура общчёствисен ёçёсене тёрекле-тме, лайăхлатма хушать. Конференци Обкомпа райкомсене Осоавиахимăн Тёп Советёне райсоветсене çирёп, ёçре тёрёслен пё кадресене тёреклетме хушать".

Кашни парторганизацин вирлё задачи—Чăваш парторганизацин XIX-мёш конференцин çак решенине пурнăçа ăнăçлăн кёртсе пырасси пулать. Оборонă ёçне—ёççынисен хисепёпе те хисеплё ёçне—хăнăрах-савăтсенче, колхозсенче—пур çёрте те тивёçлине йёркелер.

Испанири ПОУМ-ăн троцкисла-фашисла бандă пуçлăхёсен ёçё пирки йышăннă пригăвăр

Пурте пёлеççё, октябёрён 11-мёшёнче Барселонăра ПОУМ текен троцкисла-фашисла бандă пуçлăхёсене суд тума пуçланă. Фашисăма тара кёрёшнё, Испанири республикăлă стройа сирпёнче пăрахас тёллевне ёçленё бандана суд умне тăратнă. Троцкисем Испани çарне хирёç, унăн командованине хирёç ишёлтерӳле ёçсем туса пынă. Вёçем республикă çарё çинчен, çар промышленинăçё çинчен Франко генерала пёрмайах сведенисем парса тăнă.

1937 çулти май уйăхёнче çак бандă Барселонăра халăх фрончён пăтравёлтсине хирёç йунăлă путч организацилене.

Октябёрён 31-мёшёнче трибунал ПОУМ пуçлăхёсен ёçё тăрăх притăвăр йышăннă. Троцкисла бандитсенчен тăваттăшне кашнинех 15-шер çуллăха, пёрне—11 çуллăха тёрмене хупса хумала тунă.

Трибунал ПОУМ-ăн пур организацийёсене те саланса йама йышăннă.

(ТАСС).

78-мёш параллел тёлёнче

УЙЁДИНЕНИЙА УТРАВЁ, октябёрён 31-мёш. (ТАСС). Кăçал Уйёдиненийа йăтлă пёчёк утрав çинчи çурçёр станцинче, 78-мёш параллел тёлёнче, 11 çын хёл кăçат. Вёçем çурçёрти вăрăм кăссенче радио тăрах ПСК(б)П истори çинчен паракан лекцисене тимлён итлесе пыраççё. Çурçёр станцинче хёл кăçăкансем диалектикăлă материализăм çинчен паракан лекцисемпе уйрăмах хытă интересленеççё. Ситес лекци Ленинăн „Шаг вперед, два шага назад" йăтлă историлё кёнеки çинчен пулать.

Çавăн пекех, çурçёрте хёл кăçăкансем Октябёрти Социализмăма Асла революцин 21 çул тултарнине уйăвласа иртерме пикенсе хатёрленеççё. Станцинче гидрологсем вăлăçăн çёнёрен хими лабораторине тунă, радиостанцин передатчикёсемпе прийомникёсене тата динамотёлне тёплён йыснă. Электрица вăйёпе çанталăка сăнамали приборсене йусаса пётереççё тата нефть пе ёçлекен двигателе ёçе йама хатёрленеççё. Аэролог Смирнов йăлтаки çёр айёнчи температурăна виçмели приборсем конструкцилеллё, вăл вёçене пухса çитерет.

Станцинче хёл кăçăкансем йăбилей йăчёне концерт иртерме хатёрленеççё.

(ТАСС).

ПЁТЁМ СОЙУЗРИ САМРĂКСЕН ЛЕНИНЛА КОММУНИСЛА СОЙУЗЁН ТЁП КОМИТЕЧЁ

ЧЁНСЕ КАЛАНИ

Пётём комсомолёцсемпе комсомолкăсене, пётём совет çамрăкёсене

ХАКЛĂ ЙЫЛТАШСЕМ!

1938 çулти октябрён 29-мёшёнче Ленинла Комсомол пуçланнăранпа çирём çул тулчё. ПСÇЛК Сойузне пролетариатăн тата пётём тёнчери пусмăрти халăхсен асла çулпуçёсем—Ленин тата Сталин тунă.

Комсомол—совет çамрăкёсен партилё мар массалă организацийё, вăл боль шевикла партин сумёне тăрать, тӳррёмех вăл йертсе пынине ёçлет тата унăн резервё, шанчăкла помошникё пулса тăрать.

Çак çулсенче Ленинла Комсомол боль шевиксен партинчен çирёп пулма, коммунисăм ёçёшён шанчăкла пулма, халăха чунтан йăратма, революцин ташманёсене хăйăрран кураймасăр тăма, вёçене хирёç кёрешес ёçре тимёр пек çирёп пулма, çёнтерӳ тăвас ёçре хурçа пек çивчё ирёклё пулма вёренсе пычё.

Хамăр çёршывра пролетариат диктатурине çирёплетессишён, социализăм çитерессишён пыракан кёрешӳн пур участкисенче те Ленинла Комсомолăн ролё аслă та нумай ёнлё.

Йӳт çёршывсен вăрçăла интервенцийёне граждан вăрçи пынă хăйăр çулсенче ёççамрăксем совет влаçёшён, тăван çёршывшăн, социализăмшăн кёрешнё чух хăйсем мён тума пултарнине кăтартса пачёç. Комсомолёцсемпе комсомолкăсем граждан вăрçи фрончёсенче геройла пулнăшан, совет çёрё çине тапăнса килнё ташмансене хирёç пурнăçа шеллемесёр кёрешнёшён Совет правительстви комсомола Боевой Хёрлё Йалав орденёпе наградланă.

Граждан вăрçи хыççăн, боль шевиксен партийё чёнинче, совет çамрăкёсем, Ленинла Комсомол йертсе пынине, мирлё ёçе тытăнчёç, алла кёнеке тытрёç, ăслăлăха вёренсе алла илме пуçлăчёç.

Хăйсен ёçёпе комсомолёцсемпе комсомолкăсем боль шевиксен партине хамăран савăтсене, хапăрăксене, шахтăсене, рудниксене, хамăран колхозсене тума тата çирёплетме пулăшрёç тата халь те пулăшса пыраççё.

Сталинла пилёкçуллăхсен çулёсенче комсомолёцсем Днепр порогёсене çёмёрчёç, Магнитнайа тавён чул сăрчёсене шăтарчёç, Туркисиб релъсине хучёç. Хёвелтухăçёнчи тайга чăтлăхёсене тасатрёç, çёнё савăтсем туса лартрёç, метро турёç, сывлăшри çӳлёлёссене влла илсе пычёç.

Пётём Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузё социализмăла амăртăн аслă йалавне çёклерё.

Комсомолёцсемпе комсомолкăсем хамăран социализмăла промышленнăçа, хамăрăн чукунçулпа шывсул транспăртне, хамăран колхозсемпе совхозсене ӳстерсе чечеклентерессишён çине тăрса кёрешрёç тата халь те кёрешеççё. Çак кёрешӳре социализмăла ёçён малта пыракан сыннисем, çамрăк стахановăвёсемпе стахановăксем ӳссе пычёç тата халь те ӳссе пыраççё.

Социализăм строительствинче ударла ёçленёшён комсомола Ёçлёх Хёрлё Йалав орденёне наградăланă.

Комсомолёцсемпе совет çамрăкёсем хăйсен социализăмăла аслă тăван çёршыве хёрӳлён йыратаççё, ăна йӳлашки йӳт тумламё йӳлминченех сыхлама хатёр. Рабочисемпе Хресченсен Хёрлё Çарёнче, Комсомол шефа илнё Сывлăш-Çар Флочёне Тинёс-Çар Флотёнче комсомолёцсем—çар ёçне тата политикăна вёренсе хатёрленес ёçре малта пыракансем, паттăр командирсемпе политработниксем пулса тăраççё. Хамăр чикёсенчи дозорсене, боевой караульсен вахтисенче, ташмансемшён хăрушă самолётсем штурвалёсем умёнче комсомолёцсем паттăрлăхна хăйăлăх, хăйсем нимёнрен хăнăрамăнни примерне кăтартса панă тата халь те ăна кăтартса пыраççё. Хасан кӳлли патёнче хамăран таса çёршён Иапони самураййёсене хирёç пынă çапăçусенче комсомолёцсем ёмёр тёкёсёлменни чăплă мухтавпа витёнчёç.

Комсомол Ленинăн—Сталинăн ёçне вёçне çитийех парăннă çёршер пин çамрăк боль шевиксене воспитани царса пăхса ӳстерчё. Чи лайăх комсомолёцсемпе çамрăксем Совет халăхён чи чăплă та пысăк шанчăкне илчёç—вёçене халăх ССРС Верховнăй Совечён, Сойузлă тата Автономлă Советлă Социализмăла Республикăсен Верховнăй Совечёсен депутачёсене суйларё.

Боль шевиксен партийё йертсе пынипе комсомол совет çамрăкёсене хăй хыççăн илсе пырса коммунисăмла шухăш-кăмăла воспинани парат, ăна совет влаçё тавра пётёçтерет, государства управленийёне социализăмла строителёлстван пур отрăслисене вальăи те кадрсем хатёрлет.

ССР Сойузён пётём халăх хуçалăхёне 26 çула çитмен çамрăксен 9.962 ини çын ёçлеççё. Икё пилёкçуллăхсен çулёсенче кăна хапăрăк-савăт шкулёсенчен квалификацилё çамрăк рабочисемпе ротницăсене 1.600 ини çын вёрентсе кăларнă.

Комсомолёцсем нумай пиншерён инженерсем, техниксем, экономиссем, агрономсем, зоотехниксем, учительсем, врачсем, ăслăлăх, искусствă тата культурă деятелёсем пулса ёçлеççё. Комсомолёцсем совет, хуçалăх тата кооперацин аппарачёсенче йертсе пыракан государствала ёçе туса пыраççё. Çёршер пин комсомолёцсем хамăр çёршывăн аслă шкулсемне техникăлă аслă шкулсенче, техникумсемпе рабфаксенче вёренеççё, ăслăлăхăн, техникăн тата культурăн етемлёх пухнă пуйăнлăхёсене алла илнё пыраççё. Ку вăл çамрăк интеллигенци—совет çамрăкёсен чечекё. Ку вăл—ёçхалăхён Совет влаçё воспитани панă тата вёрентнё шанчăкла ывăлсемпе хёрёсем.

Боль шевиксен партийё совет интеллигенцин çамрăк ăруне марксизăм—ленинизăм теорине, общчёствала аталану саккунёсене вёрентсе хёрёшаллантарат, çамрăксене геройла боль шевикла партин опычёне традицийёсем тăрах, унăн çёнтерӳлё кёрешӳвён мухтавла историйё тăрах воспитани парат, государствăла тата общчёствăла ёçсен дейателёсене—идейăй тёлёшёнчен çирёп ёненӳлё, коммунисăмăн аслă ёçне вёçне çитийех паранна леннила-сталинла типăл кадрсем вёрентсе пиçёхтерсе кăларат.

ПСÇЛК совет çамрăкёсене пётём тёнчери революцилё ёççамрăкёсемпе интернационалла тăванла, пёр шухăшла та тусла пулассин туйёмёне воспитани парат. „Интернационализăм комсомол ёçне кёрсе пыракан тёп идейă пулса тăрат" (Сталин).

Хамăр çёршыври социализăм строительствинче ăнăçлă ёçлесе пырса, совет çамрăкёсем пётём тёнче ёçне туса пыраççё, хăйсен интернационаллă обăзательствисене пурнăçа кёртсе пыраççё, пролетарилё революцин пётём тёнчере çёнтерессине пулăшса пыраççё.

Халăхăн чи усал тăшманёсем, коммунисăм тăшманёсем, ылханлă троцкисла-бухаринла бандитсем, тискер фашисăмăн тара кёрённе йыттисем комсомала ленинла-сталинла çул çинчен пăрса йама пёрпёр ёç мар хăтланса пăхрёç. Парти йертсе пынине комсомол тăшмансен çав ирсёр хăтланăвёсене çапса салатрё, хăйён амăшён—боль шевиксен Коммунисла Партийёшён вёçне çитийех шанчăкла пулчё. Ленинăн—Сталинăн пурне те çёнтерекен вёрентёвёне ёçёшён вёçне çитийех шанчăкла пулчё.

Коммунисла партишён шанчăклă пулнипе, тăван çёршыв мухтавёшён ăнăçлă ёçлесе пынипе Ленинла Комсомол пётём совет халăхён йыратуне тивёçлё пулса тăчё.

Хăйён пётём çитёнёвёсене Комсомол Ленинăн—Сталинăн асла партине пула, вăл ПСÇЛКС ёçне пёрмайах йертсе пынине, Сталин йăлтаки çамрăксемшён ывăнма пёлмесёр тăрашшине тунă.

ПСК(б)П Тёпкомё комсомола çапла пётёмпех тёрёс кăтартса парат:

„Йӳлашки вăхăтра ПСÇЛКС Тёпкомё çамрăксене идейăлă воспитани парас, Комсомола тăшманла элементсенчен тасатас, Комсомол работникёсен çёнё кадресене йертсе пыракан ёçе лартса пырас ёçре чылай пысăк йăнăшсем туман пулсан, çак çитёнӳсем тата пысăкрах та нумай ёнлёрех пулнă пулёчёç".

Революцилё теорине аллă илсе пырăр, ПСК(б)П геройла историне—марксисăм-ленинисăмăн сокровищинчине вёренёр.

Хăварап-ёçле, хамăран партийе рабочи класăн культурăлă-техникăлă вăçине инженерла-техникла ёç работникёсен вăçине таплашиччен хăпартма пулăшар.

Пирён пуçламёш тата вăтам шкулсенче хамăран сёршыври çамрăксем тата хёрсем 33 мёлйун çын вёренеççё.

Аслă совет шкулёсенче хамăр çёршыври çамрăксем 550 пин çын вёренеççё.

Вёренекен çамрăксем, совет студенчёсем!

ПСÇЛКС çирём çул тултаринне отличнă вёреннине палла тăвар. Асра тытăр, стемлёх пухнă пётём пелӳлёхсене вёренсе çитсен кăна коммунисăм тума пулать. Шкулсенчен вёренесе туха государствăн ёçён анлă çулё çине тăрса, есёр социализăм строительствин пур участкисене те йертсе пырас тёлёшне халăх ирёкёне кăмăлне пурнăçа кёртсе пыракансем пулаттăр. Хамăран промышленнăçпа транспăртăн; хамăран йăлхуçалăхёне культурăн тивёçлё боль шевикла руководительёсем пулма хатёрленёр. Боль шевисăма алла илёр, ПСК(б)П историне—марксисăм-ленинисăмăн сокровищинчине вулăр та вёренёр!

Комсомолёцсемпе комсомолкăсем, Комсомолра совет интеллигенцине вёренекен çамрăксем хушшинче ёçлессине кирлё пек хăкламанни пур, савна хирёç вирлёх те татăклăн кёрешёр!

Социализăмла державăн хăваттлă халăхё капиталисăмла йёрн-тавралăхра пурăнать. Епёр коммунисăм патне çёнтерӳлён пынине чăрман-тарас шутпа ташмансем пётём вăйне хурса тăрашаççё. Тёнчен виçё пайёне çёнё империалисăмла вăрçа çулăмё йăлкашат те ёнтё. Фашиссем совет халăхне çёнё йунăлă вăрçа туртса кёртме тăрашаççё.

Рабочисемпе Хресченсен Хёрлё Çарё, хăйăлла та паттăр погранични-кисем совет чиккисенчё çивёчён те сисёмлё хуралласа тăраççё, ташман пирён çёршывăн таса чиккисем çине тепёр хут тапăнма шухăш тытсан, Хёрлё Çаран патăр та хăйăлă бойецёсем асран кайми Хасан урокне çёнё вăйпа тепёр хут кăтартса парёç. Çёршыва сыхлама вёçемпе пёрле пётём совет халăхё—хăйён тăван Хёрлё Çарне пулăшма йăланах хатёр тăракан совет халăхё çёкленё.

Пирён хамăран тăван çёршывăн оборонă тёрекне малашне те ывăнма пёлмесёр çирёплетесе пымала. „Нимёнле „ăнсăртлăх" та тата пирён тулти тăшмансен нимёнле фокусёсем те пире кётмен çёртен пырса ан тивчёр, тесе хамăран пётём халăха вăрçăна тапăнас хăрушлăх умёнче мобилизацилё хатёр тытса тăмала..." (Сталин).

Комсомол вирçёмёш вунă çулта кёнине кашни комсомолёцпа комсомолка, кашни çамрăк, кашни хёр вăрçа техникине çине тăрса вёреннине, хăйён мобилизацилё хатёрлёкне ӳстернине йалла тума тивёç.

Вăрçа вутне чёртекен фашиссем, пирён çёршыва хăйсен агенчесене йăрса, пирён оборонăна хуçалăх хăватне шалтан çёмёрме тăрашаççё.

Боль шевикла сисёмлёхе пур майсемпе те хăпартса пырасси, халăх ташмансене хирёç, хамăран партин ташмансене хирёç, коммунисăм ташмансене хирёç пёр килёшсе тамасăр, ăн вирлён те татăклăн кёрешесси хамăр çёршывăри кашни комсомолёцăн, кашни çамрăк çыннăн таса обăзанăнăçё пулса тăрат.

Комсомолёцсемпе комсомолкăсем!

Совет çамрăкёсене коммунисла воспитани парас тёлёшне хамăран задачăна малашне тата çитёнӳлёрех пурнăçа кёртсе пырас тесе, пирён ПСÇЛКС ёçёсен боль шевикла дисциплинине тата ытларах çирёплетес пулать, унсăрăн çамрăксене коммунисла воспитани парас ёçе лайăхлатасси пулма пул-

(Йӳлашки 4-мёш страницăра)

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакцилĕнĕ. КĔСКЕ КУРС. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

VI сыпăкăн йулашки

4. Патша çарĕсем фронтра парăнни. Хуçалăх йухăнни. Патша йĕркин кризисĕ.

Вăрçа ĕнтĕ виçĕ çул пына. Вăрçăра миллионшар сынсене вĕлернĕ, суранлатнă, сынсем вăрçа пирки пуçланса кайнă хыттă сарăлакан чир-чĕрсемпе нумай вилнĕ. Буржуазине помешчиксем вăрçăна пуйса пынă. Анчах рабочисемпе хресченсем штлараx та штлараx нушасемпе хĕнхурсем тӳснĕ. Вăрçă Российăн халăx хуçалăхне йухăнтарса пынă. Сывлăхлă та вăйлитти работниксене 14 миллион сына йăхăн хуçалăхран уйăрса çара илнĕ. Хапăраксемпе савăтсем чăрана-чăрана ларнă. Тырă акса тăвасси чакнă — работниксем çитмен. Халăх тата фронтри салтаксем выçă ларнă, урана тăхăнмалисемсĕр тата тумтирсĕр тăрса йăлнă. Вăрçа çĕршывăн пĕтĕм рессурсĕсене çатса пынă.

Патша çарĕ парăннă хыççăн пăрăнса пынă. Нимĕç артиллерийĕ патша çарĕсем çине пăр çуна пек снарйадсем сапнă. Патша çарĕн тупăсем çитмен, снарйадсем çитмен, винтовкăсем те пулин çителĕклĕ пулман. Хăшпĕр чухне виçĕ салтака пĕр винтовка тивнĕ. Вăрçă вăхăтĕнчех ĕнтĕ патшан çар министрĕ Сухомлинăв сутăнчăклă ĕçсем туни палăрнă, вăл нимĕç шпионĕсемпе çыхăнса тăнă. Сухомлинăв нимĕç разведки пана заданисене—фронта снарйадсем тăратассине пăсса пыма, фронта тупăсем памала мар, винтовкăсем памала мар тума хушнисене ĕçе кĕртсе пынă. Патшан хăшпĕр министрĕсемпе генералĕсем хăйсем нимĕç çарне ăнăçлăн çĕнтерсе пыма вăрттăн пулăшнă: нимĕçсемпе сыхăннă патша майăпне пĕрле вĕсем нимĕçсене çарти вăрттăнлăхсене пĕлтерсе тăнă. Çавăнпа патша çарĕ парăнса пыннинчен тата унăн ирĕксĕрех кайăла чакмала пулнинчен ним тĕлĕнмели те çук. 1916 çул тĕлне нимĕçсем Поļшăна тата Прибалтикăн пĕр пайне туртса илме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ.

Çаксене пурне те пула рабочисем, хресченсем, салтаксем, интеллигентсем патша правительствине кураймăн пулнă, ун çине тарăхнă, халăх массисен вăрçа ирĕç, тата вăйăркине хирĕç тылра та, çавăн пекех фронтра та, центрта та, çавăн пекех окраинăсенче те революцилĕ йухăмне вăйлатса тата çивĕчлетсе пынă.

Камăлсăрлăх çавнашкалах империализмăлă вырăс буржуазине те йăрса илме пуçлана. Ăна патша дворĕнче Распутин ĕнĕрлĕ сĕмĕрсем, нимĕçсемпе сепаратнăй мир тăвас ӳсӳлĕрпе уççăнах тытса пыраканскерсем, хуçаланни тарăхтарнă. Буржуази патша правительстви ăнăçлăн вăрçма пултарайманнине штлараx та штлараx çухалнине, ун вырăнне буржуазине çыхăнса тăнă Михаил Романăва патшана лартас тесе, дворцовăй переворот тума йышăннă. Çакна тунипе вăл икĕ мулкача тытасшăн пулнă: пĕрремĕшĕнчен, влаç патне пырса империализмăлă вăрçăна малала туса пыма май тăвасси, иккĕмĕшĕнчен—пĕчĕк дворцовăй переворот тунипе халăхăн пысăк революцилĕ килсе çитессине,—унăн хумĕсем ӳссе пыннă,—чарса лартасси.

Вырăс буржуазине çав ĕçре Англипе Франци правительствисем пур ĕнчен те пулăшса пынă. Патша вăрçăна малала та туса пыма пултарайманнине вĕсем курнă. Вĕсем патша нимĕçсемпе сепаратнăй мир тунипе ĕçе пĕтерсе лартассинчен хăранă, Патша правительстви сепаратнăй мир тунă пулсан, Англипе Франци правительствисем хăйсен вăрçăри сойузникне—Российăна çухатнă пулĕччĕç, вăл сойузник хăйĕн франчĕсене противникăн вăйăсене туртса пынă кăна мар, тата Франципе суйласа илнĕ вырăс салтаксĕсене вуншар пин çын йăрса тăнă. Çавăнпа тата вĕсем вырăс буржуазине вăл дворцовăй переворот тума хăтланнă чух пулăшнă.

Çапла вара, патша тăр пĕччен тăрса йăлнă.

Фронтра ăнăçсăрлăхсем пулса пырасси парăнман вăхăтрах, хуçалăх йухăнса пĕтесси штлараx та штлараx вăйланса пынă. 1917 çулти январĕпе февралĕ уйăхĕсен кунĕсенче апат-çимĕç, чĕртавар тата хутмалисем питех сахалланса, хĕсĕнсе çитнĕ. Петроградпа Мускава апат-çимĕçсем турттарса пырасси пĕтĕмпе пекех чарăнса ларнă. Пĕр предприйати хыççăн тепри хупăнма тытăннă. Предприйатисене хупса лартни ĕçсĕрлĕхе вăйлатнă. Уйăрăнах рабочисен пурнăçĕ тӳсме çук йăпăрланса çитнĕ. Халăхăн андăрах та андăрах массисем çавнашкал тӳсме çук йăвăр пурнăçран пĕр çулпа кăна—патша самодержавине сирпĕтсе антарнипе кăна тухма пулнине ăнланса пынă.

Патша йĕрки чăнласах вилемлĕ кризиса пурăнса иртернĕ.

Буржуази кризиса дворцовăй переворотпа татса хума шутланă. Анчах халăх ăна хăй майлă татса панă.

5. Февралъти революци. Патша йĕрки ишĕлсе анни. Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсене туни. Вăхăтлăх правительствă туни. Икĕвлаçлăх.

1917 çул йăнварĕн 9-мĕшĕнчи стачкăпа пуçланнă. Стачкă вăхăтĕнче Петроградра, Мускавра, Бакура, Чулхулара демонстрацисем пулса иртнĕ, Мускавра йăнварĕн 9-мĕшĕнче пулнă забастовкăна мĕнпур рабочисенчен виçсĕмĕш пайĕ йăхăн хутшăннă. Тверской бульварти икĕ пинлĕ демонстрацине утлă полици хăваласа салатса йăнă. Петроградра Выборгри шоççе çулĕ çинче демонстрантсем çумне салтаксем пĕрлешнĕ.

„Пĕтĕмĕшле стачкă тăвас идейăн, —тесе пĕлтернĕ Петроградри полици,—кунăн кун çĕнĕ сторонниксем хутшăнса пыраççĕ тата вăл 1905 çулта пулнă пекех пуринпĕн те палăлă идейă пулса пырать".

Меļшевиксемпе есерсем пуçланса кайнă революцилĕ йухăма либерал-буржуазине йăрăхла рамкăна кĕртме тăрăшнă. Меļшевиксем Государственнăй думăна уçнă кун тĕлне, февралĕн 14-мĕшне, рабочисем пухăнса Государственнăй думă патне кайăссине организацилеме сĕннĕ. Анчах рабочисен массисем боļшевиксем хыççăн, думă патне мар, демонстрацине кайнă.

1917 çулти февралĕн 18-мĕшĕнче Петроградра Путиловски заводĕнче забастовки пуçланă. Февралĕн 22-мĕшĕнче пуçлăхсем шухăша пырăçĕç. Рабочисем полицине жандармерине кĕçпăшалсăрлатаççĕ те хăйсем хĕçпăшалланаççĕ. Çапах та, полицине хирĕç хĕçпăшалпа тыттăçни Знаменски площăдĕнче демонстрацине персе салатнине вĕçленет.

Хабалăв генерал, Петроградри çар округĕн командуйăшшийĕ пулнăскер, рабочисен февралĕн 28-мĕшĕнче (мартăн 13-мĕшĕнче) ĕçе тытăнмала, ĕçе тытăнмасан вĕсене фронта йăрассĕ, тесе пĕлтерет. Февралĕн 25-мĕшĕнче (мартăн 10-мĕшĕнче) патша Хабалăв генерала: „Столицăри йĕркесĕрлĕхсене ыратах çарса лартма хушатăп", тесе приказ парать.

Анчах революцине „çарса лартма" ĕнтĕ май килмен.

Февралĕн 26-мĕшĕнче (мартăн 11-мĕшĕнче) кăнтăрла Павловски полкăн запасри батальйонĕнчи 4-мĕш рота пăшалсемне пеме пуçланă, анчах рабочисем çине мар, рабочисемпе перкелешме тытăннă утлă городовойсем çине. Çаршăн чи хастарлăн та çине тăрса кĕрешеççи, уйăрăнах хĕрарăмсем-работницăсем йĕнчен, пуçланса кайнă, вĕсем тӳррĕмĕнех салтаксем патне кайса, вĕсемпе тăванлашнă, вĕсем салтаксене хăйсем пит те курăмăн пулса çитнĕ патша самодержавине сирпĕтсе антарма халăха пулăшма чĕннĕ.

Боļшевиксен партин политикăлă ĕçĕсене йĕртсе пырассине вăл вăхăтра пирĕн парти Тĕп Комитечĕн Петроградра пулнă Бӳровĕ Молотăв йулташ пуç пулса тăнине туса пынă. Тĕпком Бӳровĕ февралĕн 26-мĕшĕнче (мартăн 11-мĕшĕнче) патша йĕркине хирĕç, Революцилĕ вăхăтлăх правительства тăвассишĕн пыракан хĕçпăшалла кĕрешĕве малала туса пыма чĕнсе манифес кăларнă.

Февралĕн 27-мĕшĕнче (мартăн 12-мĕшĕнче) Петроградри çарсем рабочисем çине пăшалпа неме килĕшмен, восстани тăвакан халăх йене куçма пуçланă. Февралĕн 27-мĕшĕнче ирхине кăна восстанщ тăвакан салтаксем 10 пин çеç пулнă; каçхине вара вĕсем 60 пин мытла пулнă.

Восстани тăвакан рабочисемпе салтаксем патша министрĕсемпе генералĕсене арĕслеме, революцилонерсене тĕрмесенчен кăларма тытăннă. Политикăлă ĕçшĕн хупнисем тĕрмерен кăларсачан революцилĕ кĕрешӳ ĕçне хутшăнса пынă.

Урамсенче çуртсен маччисем çине пулемечсемпе улăхса ларнă городовойсемпе жандармсене хирĕç пăшалпа пересси çаплас пынă. Анчах çарсем пит хăвăрттăн рабочисем йенне куçни патша самодержавин кунçулне татса панă.

Революци Петроградра çĕнтерни çинчен хыпар ытти хуласемпе фронтсенче те сарăлсан, рабочисемпе салтаксем пур çĕрте те патша чиновникĕсене сирпĕтсе антарма тытăннă.

Февралъти буржуалă-демократилĕ революци çĕнтернĕ.

Революци акă мĕншĕн çĕнтернĕ: рабочи клас революцине малтан пуçарса пыраканĕ пулнă тата салтак шинелĕсем тăхăнтартна хресченсен миллионлă массисен „миршăн, çăкăршăн, ирĕклĕхшĕн" кĕресшес йухăмне пуçарса ĕертсе пынă. Пролетариат гегемонийĕ революцине ăнăçлăн туса иртерме май панă.

„Революцине пролетариат туса пынă, вăл геройлăхне кăтартнă, вăл йун йухтарнă, вăл ĕççыннисен тата чухăн халăхăн чи анлă массисене хăйĕн хыççăн илсе кайнă...", —тесе çырна Ленин революцин малтанхи кунĕсенче (Ленин, т. XX, стр. 23—24).

1905 çулти пĕрремĕш революцин 1917 çулти иккĕмĕш революци хăвăрт çĕнтерессине хатĕрлесе çитернĕ.

„1905—1907 çулсенчи виçĕ çул хушши пынă вăйăрăн та вăйлă класлă çапăçусемсĕр тата вырăс пролетариачĕн революцийĕнĕ хăвăтсĕр, иккĕмĕш революци, унăн пуçламăш тапхăрне вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе, çав тери хăвăрт, темиçе кун хушшинчех пулса иртме пултарайманнине пулĕччĕ", —тесе кăтартса панă Ленин (Ленин, т. XX, стр. 13).

Революцин малтанхи кунĕсенчех Советсем пуçланса кайнă. Çĕнтерӳлĕ революци рабочисен тата салтаксен депутачĕсен Совечĕсене туса хунă. 1905 çулти революци Советсем хĕçпăшаллă восстани организĕсем пулнине тата çав вăхăтрах çĕнĕ революцилĕ влаçăн пуçламăшĕ пулса тăнине кăтартса панă. Советсен идейи рабочисен массисен астăнăнче пурăннă, вара вĕсем патша йĕркине сирпĕтсе антарсан тепĕр кунтех ăна пурнăçа кĕртнĕ, анчах, халĕ çакăн пек уйăрăмлăх пулнă: 1905 çулта пĕр рабочисен депутачĕсен Совечĕсене кăна тунă, 1917-мĕш çулти февралъте вара боļшевиксем пуçарнине рабочисен тата салтаксен депутачĕсен Совечĕсем пуçланса кайнă.

Боļшевиксем урамсенче массăсен кĕрешĕвне тӳррĕмĕнех йертсе пынă вăхăтра, согласăтлăке партисем, меļшевиксемпе есерсем Советсенчи депутатсен выраннĕсене йăра-йăра илнĕ, вĕсенче хăйсем нумайтарах пулса пынă. Çакна тума пĕр йĕнчен боļшевиксен партин лидĕрĕсенчен нумайтарахăнĕ тĕрмесене ссылкесенче пулни пулăшнă (Ленин эмиграцире пулнă, Сталин тата Свердлов Сĕнĕрти ссылкăра пулнă), çав вăхăтрах меļшевиксемпе есерсем Петроград урамĕсенче ирĕккĕн утса çӳренĕ. Çапла вара, Петроград Советĕн тата унăн Ĕçтăвакан комитечĕн пуçĕнче согласăтлăке партисен представительĕсем: меļшевиксемпе есерсем пулнă, Çавнашкалах пулнă Мускавра тата ытти чылай хуласенче те. Ивановo-Вознесенскра, Краснойарскра тата ытти хăшпĕр хуласенче кăна Советсенче мĕн пуçланнăранпах боļшевиксем нумайтарах пулнă.

Хĕçпăшалланнă халăх—рабочисемпе салтаксем, Советсене хăйсен представительĕсене йăрса, ун çине халăх влаçĕн органĕ çине пăхнă пек пăхнă. Вĕсем рабочисен тата салтаксен депутачĕсен Совечĕсем революцилĕ халăхăн пур требованисене те, чи малтан мир тăвассине, пурнăçа кĕртĕç, тесе шутлана тата ĕненсе тăнă.

Анчах рабочисемпе салтаксем ытлашши шанни вĕсемпе усăллăн щӳт тунă. Есерсемпе меļшевиксем вăрçа пĕтерсе лартасси çинчен, мир тăвассине çĕнсе илесси çинчен шухăшланман та. Революцине вĕсем вăрçăна малала туса пымашкăн усă курма шутланă. Революцине тата халăхăн революцилĕ требованийĕсене илес пулсан, меļшевиксемпе есерсем çапла шутланă: революци пĕтрĕ ĕнтĕ, халĕ задача революцине çирĕплетессинче тата буржуазине пĕрле „нормальă", конституци тăрăх пурăнма тытăнассинче пулса тăрать. Çавăнпа та Петроград Совечĕн есерла-меļшевикла руководстви вăрçа пĕтересси çинчен тăрăканыйăва, мир тăвасси çинчен тăрăкан ыйăва пĕтерсе лартас тата власа буржуазине парас тĕлĕшпе хăйĕнчен килекен ĕçсене пурне те тунă.

1917 çулти февралĕн 27-мĕшĕнче (мартăн 12-мĕшĕнче) Государственнăй думăн либерал-буржуазнăй депутачĕсем есерла-меļшевикла лидĕрсемпе вăрттăн калаçса татăлса, Государственнăй думăн вăхăтлăх комитетне туса хунă, унта пуç пулса тăма IV думăн председателĕне Родзанко помешчике, монархиса лартнă. Кун хыççăн темиçе кунтан вара Государственнăй думăн Вăхăтлăх комитечĕне рабочисен тата салтаксен депутачĕсен Совечĕн Ĕçтăвкомĕн есерла-меļшевикла лидĕрĕсем Российăн çĕнĕ правительствине—буржуалă Вăхăтлăх правительствăна туса йĕркелес пирки боļшевиксенчен вăрттăн калаçса татăлнă. Çав Вăхăтлăх правительствăн пуçлăхне Николай II патша февралъти переворот пуличченех хăйĕн правительствин премйер-министрне лартма шутланă Ļвов кньяса лартма палăртнă. Вăхăтлăх правительствă составне кадетсен пуçлăхĕ Миļуков, октябрисссен пуçлăхĕ Гучков тата капиталистсен класĕн ытти палăлă представительĕсем те кĕнĕ, „демократи" представительĕ вырăнне шутласа Керенский есера кĕртнĕ.

Çапла пулса тăнă: Совет Ĕçтăвкомĕн есерла-меļшевикла лидĕрĕсем влаçа буржуазине панă, рабочисен тата салтаксен депутачĕсен Совечĕ, кайăрахпа çăкăр çинчен пĕлсен, хăйĕн нумайтарахăшĕпе, боļшевиксем хирĕç тăнине пăхмасăр, есерла-меļшевикла лидĕрсен ĕçĕсене ырланă.

Çапла пулса тăнă Российăра государствăн çĕнĕ влаçĕ. Çак влаç, Ленин калана пек, „буржуазин тата буржуазиленнĕ помешчиксен" представительĕсенчен тăнă.

Анчах буржуалă правительствăна йунашарах тепĕр влаç—рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕ пулнă. Салтаксен Советри депутачĕсем—вĕсем, пуринчен ытла, вăрçа вăрçма мобилизацилеменĕ хресченсем пулнă. Рабочисемпе салтаксен депутачĕеен Совечĕ рабочисемпе хресченсен патша влаçне хирĕç пыракан çойузĕн органĕ тата çавăнпа пĕрлех—вĕсен влаçĕн органĕ, рабочи класпа хресченсен диктатурин органĕ пулнă.

Çапла вара, икĕ влаç, икĕ диктатурă хăйне майлă пĕрлешни пулса кайнă: буржуази диктатурин—Вăхăтлăх правительствă, тата пролетариатпа хресченсен диктатурин—рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсем.

Икĕвлаçлăх пулса тăнă.

Советсенче малтанхи вăхăтра меļшевиксемпе ĕсĕрсем нумайтарах пулнине мĕнпе ăнлантарса памала-ха?

Çĕнтерӳ тунă рабочисемпе хресченсем ирĕклĕнех влаçа буржуази представительĕсене панине мĕнпе ăнлантарса памала-ха?

Ленин ăна çакăнпа ăнлантарса панă: политикăна тутанса пăхман темиçе миллион сынсем вăранса, политикăй патнеле туртăнни. Вĕсем, пуринчен ытла, вак хуçасем, хресченсем, нумай пулмасăр хресченсем пулнă рабочисем, буржуазине пролетариат хушшинчи вăтаçĕрте тăнă сынсем пулнă. Российă ун чухне Иевропăри мĕнпур пысăк çĕршывсем хушшинче чи ытлăрах вакбуржуалă çĕршыв пулнă. Çак çĕршыва ĕнтĕ „вакбуржуалă питтĕ пысăк хум мĕнпура пĕтĕмпех ăна туна, âстăнăл пролетариата хăйĕн ăшшĕне кăна мар, тата идейă йенĕпе те путарса хунă, урăхла каласан, рабочисен пит те авăл ăшшĕсене политикă çине вакбуржуала пăхас шухăша ĕертнĕ, çав шухăшпа çăвăрса илнĕ" (Ленин, т. XX, стр, 115).

Вакбуржуалă стихийăн çак хумĕ ĕнтĕ меļшевиксемпе есерсен вакбуржуалă партийĕсене çиеле илсе тухнă та.

Ленин çапла кăтартса панă: тепĕр сăлтавĕ—вăл вăрçă вăхăтĕнче пролетариат составĕ улшăнни тата революци пуçламăшĕнче пролетариат çителĕклĕ таран âстăнăл тата организацилĕ пулманни пулса тăрать, вăрçа вăхăтĕнче пролетариатăн хăйĕн составĕнче чылай улшăнусем пулса иртнĕ. Иалан ĕçлекен рабочисенчен 40 процентне çара мобилизацинеле пулнă. Вăрçă пынă çулсенче, мобилизацирен пыранса йулас шутпа, предприйатисене пролетариатшăн йут шухăшлă вак собственниксем, кустарсем, лавкка хуçисем пырса лекнĕ.

Рабочисен çак вакбуржуалă сийĕсем ĕнтĕ вакбуржуалă политикăсемшĕн—меļшевиксемпе есерсемшĕн тăрантаракан çимĕç илсе тăмали выран пулса тăнă та.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ халăхăн политикăна тутанса пăхман ăнлă массисем, вакбуржуалă стихийăн хумĕ айа тунăскерсем тата революцин малтанхи çитĕнĕвĕсемпе ытлашши савăнса кайнăскерсем, революцин малтанхи уйăхсенче соглашатĕлле партисен тытăнĕнче пулнă тата буржуалă влаç Советсене хăйсен ĕçне туса пыма чăрмантармăк тесе çамăллăн шанса, государствă влаçне буржуазине пама килĕшнĕ.

Боļшевиксен партийĕ умĕнче массăсем хушшинче чăтăмлă ăнлантарулă ĕç туса пырса, Вăхăтлăх правительствăн империализмăлă характĕрне уçса кăтартас, есерсемпе меļшевиксен предательлĕ ĕçне тăрă шыв çине кăларас тата Вăхăтлăх правительствăна Советсен правительствине уйăлтармасăр мир тăвассине пурнăçа кĕртме çуккине кăтартса парас-задача тăнă.

Боļшевиксен партийĕ вара çав ĕçе тума мĕн пур хастарлăхпа тытăннă.

Вăл хăйĕн уççăн тухакан хаçачĕсене çĕнĕрен каларма тытăнать. Февралъти революци хыççăн пилĕк кун иртсенех Петроградра „Правда" хаçат, кун хыççăн темиçе кунтан—Мускавра „Социал-демократ" тухса тăма тытăнать. Парти—либерал-буржуази çине шанниччен, меļшевиксемпе есерсем çине шанниччен хăтăлса пыракан массăсен пуçне тăрса кĕрешме тытăнать. Вăл салтаксене, хресченсене рабочи класпа пĕрле кĕрешме кирлине чăтăмлăн ăнлантарса пырать. Вăл вĕсене—революцине малала аталантарса пымасăр, Вăхăтлăх правительствăна Советсен правительствине уйăлтармасăр мир те, çĕр те илес çуккине ăнлантарса пырать.

КĔСКЕ ВЫВĂДСЕМ

Империализмăлă вăрçă капитализмăлă çĕршывсем пурте пĕр вăйçепе аталанса пыманнине пула, чи пысăк державăсем хушшинче шайлашса тăрассине пăснине пула, империализссене тĕнчене çĕкленĕ пайлама тата вăйсем çĕнĕле шайлашса тăрассине тума кирлине пула пуçланса кайнă.

II Интернационал партисем рабочи класăн ĕçне сутман пулсан, вĕсем II Интернационал Конгресĕсем вăрçа хирĕç йышăннă решенисене пăсса пыман пулсан, вĕсем активлăн кĕрешме тата рабочи класа хăйсен империализмăлă правительствисене хирĕç, вăрçă чĕртекенсене хирĕç çĕкленме тытăнна пулсăн, вăрçа çавнашкал ишĕтерӳлĕ характĕрла пулман пулĕччĕ, тен, пачах та çавнашкал вăйлăн сарăлса кайман пулĕччĕ.

Боļшевиксен партийĕ социализмăпа интернационализмăн ĕçне тĕрĕс туса пыракан тата хăйсен империализмăлă правительствине хирĕç граждан вăрçи организацилекен пĕртен-пĕр парти пулнă. II Интернационалăн ытти партийĕсем пурте хăйсен йертсе пыракан сӳлти сийĕ урăл буржуазине сыхăнса тăнă пирки, империализмăн тытăкăне лекнĕ, империализмăн йенне тарса кăсна.

Капиталисмăн пĕтĕмĕшле кризиссине палăртса тăраканнĕ пулса вăрçă çав кризиса çĕнĕлетнĕ тата пĕтĕм тĕнчери капитализмăна хавшатнă. Российăри рабочисем тата боļшевиксен партийĕ, тĕнче-ре чи малтан, капитализмăн вăйсăрлăхĕне ăнăçлăн усă курса, империализмăн фронтне татнă, патшана сирпĕтсе антарнă тата рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсене туса хунă.

Революцин малтанхи çитĕнĕвĕсемпе ытлашши савăнса кайнă тата меļшевиксемпе есерсем: пайăантан пурте лайăх пулса пырать, тесе шантарса каланине лăплланнă вак буржуазин, салтаксен, çавнашкалах тата рабочисен массисем Вăхăтлăх правительствăна шанаççĕ, ăна хута кĕреççĕ.

Боļшевиксен партийĕ умĕнче революцин малтанхи çитĕнĕвĕсемпе ытлашши савăнса кайнă рабочисемпе салтаксен массисене революцин пĕтĕмпех çĕнтересси инçетрине, влаç буржуала Вăхăтлăх правительствăна аллинчех тăнă чухне тата Советсенче соглашатĕлсем—меļшевиксемпе есерсем хуçа пулса тăнă чухне халăх мир те, çĕр те, çăкăр та илес çуккине, пĕтĕмпех çĕнтерме малала тата тепĕр утăм туса, влаçа Советсене пама кирлине ăнлантарас задача тăнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хусан чăвашсăлăн Канашри вакунсем йăсакан сайăт сумĕнчи 29 мĕш № вăтам шкулта У-мĕш класра вĕренекен отличницăсем—Д. Парамонăвă (сулахайра) тата Г. Петровă урока хатĕрленеççĕ.

К. Бабайĕн фото-ӳкерчĕкĕ.

(ПСК(б)П историйĕн кĕске курсĕн малалли „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрсенче пичетленет).

Парти пурнăçĕ

Хуçалăх ĕçĕсене манма йурамаçĕ

ЙĔПРЕÇ. ПСК(б)П райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче „Спотăран" хăма çуракан савăт директорĕн Читлĕвăн тата парторгĕ Громăван отчочĕсене итлерĕ.

Читлĕв хăйĕн отчотĕнче савăтри çитменлĕхсене пĕтĕмпех пытарса хăварма пăхрĕ, анчах тĕрĕслесе тупнă çитменлĕхсене катартăра парсан тунма пултарайманрĕ.

Çметă тăрăх савăтра строительствăпа ремонт ĕçĕсене 134.900 тенкĕлĕх тумала пулнă. Анчах пайăнхи куна мĕн пурĕ те 50.000 тенкĕлĕх кăна ĕç тунă. Рабочисем вальӳи пурăнмали çурт 2 тумала пулнă, кирлĕ материалсем пурте хатĕр, анчах пĕр çуртне те туман.

Рабочисене вальӳи тунă хватер çурчĕсем йухăннă, вĕсене пĕрне те йăсаман. Çавна пула 105 рабочирен хăшĕпĕр 50—60 сын çеç ĕçе тухаççĕ. Пурнăç условисем начаррипе рабочисем урăх вырăна йĕ килĕсене тухса кайнисем те палăраççĕ.

Савăтра профсойуз ĕçĕ пĕртте палăрмасть. Куртан тĕлĕмели çук, мĕншĕн тесен савăт комитечĕн председательĕ Андрейĕв улттăçă. Вăл чылай вăхăт хушши хăйне соччувствуйушчи тесе пурăннă, анчах тĕрĕсленĕ хыççăн вăл нихăçан та сочувствуйушчи пулманни курăнчĕ.

Коммуниссем савăтри тата Читлĕвăн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен сӳтсе-явса йышăннă решенисене парторг Громăн пурнăçа кĕртмен. Рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕç йулашки вăхăтра çителĕксĕр. Пуçламĕш парторганизаци начар ӳсет.

Директор Читлĕв рабочисенчен уйăрăлса кайнă. Вăл рабочисен катартăвĕсемпе сĕнĕвĕсене йăратман. Стахановла йухăма йĕртсе пыман, уйрăм стахановецсемпе ĕçламен. Çавăн пекех, Читлĕв кадрсене тĕрĕслес тĕлĕшне нимĕн те туман. Вăл клас тĕлĕшĕнчен йӳт çынсемпе, йăла тĕлĕшĕнчен пасалнă, ĕçке йĕрнĕ, патшалăх пурлăхне çарататкан çынсемпе кĕрешес вырăнне, вĕсене савăта, савăтăн аппаратне ĕçе илнисем те пулнă. Ака, нумай вăхăт хушши савăт директорĕнпе бухгалтĕрĕ пулса ĕçленĕ Липатăвах илер (халĕ ăна ĕçрен кăларнă). Вăл нихăçан та йĕркелĕн ĕçламен. Рабочисене улталанă, вĕсен ĕçлекинĕсене нумай пытарса йăлăнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçнĕ, хăшпĕр чухне уйăхĕпе те ĕçре пулман. Анчах çав вăхăтрах Читлĕв ăна ĕç укçи тӳлесе тăнă. Йулашки вăхăтра савăт директорĕнче кассир пулса ĕçленĕ Илларионăван жуликла ĕçĕсем пурне те палла пулнă, анчах ăна Читлĕв кассира илес савăтăн 850 тенкĕ укçине пĕтерттернĕ.

ПСК(б)П райкомĕ Читлĕвăна савăтри çитменлĕхсемпе ирсĕрлĕхсемшĕн савăт директорĕнчен калapас, тесе йышăннĕ.

Ф. Захарăв.

Редакцирен. Савăтра пулнă çитменлĕхсемшĕн ПСК(б)П райкомĕ ответлă. Вăл ку савăтăн ĕçĕсем йухăнса çитсен тин „çавăрăнса пăхнă", куллен асăрхаса пыни, çитменлĕхсене пĕтерме вăхăтра пулăшни пулман. Çуçалăхлă ĕçсене партилĕ ĕçченчен уйăрма йураманнине парти райкомĕ манма пулмала. Савăтăн ĕçĕсене çывăх вăхăтрах йыса йăнăма мĕн кирлисене пурне те тăвасси парти райкомĕнчен килет.

Паха ĕçлекен шкулшăн

Партипе правительствă шкул ĕçне питĕ пысăк вырăна хурса хаклаççĕ. Ачасене вĕрентсе çын тăвасси пĕчĕк ĕç мар. Шкул ачана коммунисмшăн мĕнпур чĕрепе ĕçлекĕн çын туса кăларать.

Ачана вĕрентсе çын тăвасси, унăн çулне тĕрĕс çулпа йăарасси— пурте учительтен килет.

Епĕ 11 çул хушши учитĕл ĕçĕнче ĕçлесе 5 çул ĕнтĕ пĕр класра икĕ çул ларакан ача курман, çавăн пекех хăйĕн пурнăçра, чирлисĕр пуçне, ача кун сиктерсе çӳренине те курман, ача учитĕле итлемении çинчен нихăçан та шухăшламан. Ачасем тăрăшса вĕренеççĕ, обшчествăлă ĕçсенче те хăвасланса ĕçлеççĕ.

Вĕренӳ ĕçĕ анăçла пултăр тесен, учитĕлĕн пур ĕçе малтан курса, планпа хăй вăхăтĕнче туса пымала. Учитĕл хăй ĕçне йуратмала, тăрăшмала, çителĕклĕ таран ĕçлемеле.

Шкул пурнăçне лайăх йĕркелесси учитĕл ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе сыхăнса ĕçленинчен те нумай килет. Ашшĕ-амăшĕсемпе сыхăнса ĕçлес тесе, епĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен ашшĕ-амăшĕсен пухăвне тăватăп. Çав пухура вĕсем шкула мĕнле пулăшу пама пултарни çинчен тата малала ĕçлесе пымали çинчен калаçса татăлатпăр, ĕç планĕ тăватпăр.

Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене кашни уйăхра пĕрреран кайа мар туса иртернĕ. Ку пухусене йаланах шкул ĕçĕсене çутатса пынă.

Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсем питĕ активлăн иртеççĕ, пухусем хыççăн ачасемпе тĕрлĕ вăйăсем туса паратпăр, йурăсем йуратпăр. Ачасен ашшĕ-амăшĕсене епĕр тĕнчери лару-тăру çинчен, Совет Сойузĕнче пулакан çĕнĕ хыпарсем çинчен, çĕнĕ постановленисем çинчен йĕнлантарса паратпăр, Çавăнпа та ку пухусене йал çыннисем хăвхаланса кĕтсе илеççĕ, пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ, шкула йаланах пулăшса пырассĕ.

Кунсăр пуçне, епĕ хам тунă план тăрăх ачасем патне килĕсене кайса, вĕсен килти условисене вĕренетĕп, ачан килти пурнăçĕпе палăлашатăп, ача мĕнпе интересленинне тĕплĕн вĕренетĕп.

Урок вĕренӳ процесĕн чи палла пайĕ пулса тăрать. Урока лайăх иртересси урока мĕнле хатĕрленнинчен килет.

Программă материалне пĕлни ҫеҫ учитĕлшĕн ҫителĕксĕр. Вăл урока хатĕрленнин пĕр пайĕ кăнаха. Ачасене мĕнле майпа йĕнлантарасси, мĕнле майпа пур ачасене те ĕçе хутшăнтарасси, урока вĕренекенсене пурне те йĕнланмала тăвасси—учитĕлĕн чи пысăк задачи. Çавăнпа та вăл ĕç çинчен епĕ ытларах шухăшлатăп, урока тĕплĕн хатĕрленетĕп. Урокăн пур ĕнĕсене те лайăх пăхса тухатăп.

Урока хатĕрленесси кунпа ҫеҫ пĕтмест. Тата мĕнле нагъаднăй пособисемпе усă курмалине темиçе кун малтан пăхса тухатăн, вĕсене тĕплĕн хатĕрлетĕп.

„Начальная школа" журнал, „Учительская газета" т. ыт. тĕрлĕ хаçатсем учитĕлшĕн кирлĕ йăласем. Вĕсенче вĕренӳ процесне, аста педагогсен ĕç опытне кăтартăса паракан материалсем нумай пичетленеççĕ. Хаçат-журналсенчи материалсене епĕ тĕплĕн вĕренетĕп, хам пурнăçлама пултарнисене ĕçре туса пыратăп. Методикăлă материалсем ĕçре питĕ пулăшаççĕ.

Социализмлă ăмăрту вĕренӳ пахалăхне хăпартас ĕçре пысăк вырăнта тăрать. Анчах ачасем хушшинче ăмăрту ĕçне вăхăтра тĕрĕслесе пымасан, вăл хут çинче кăна йулма пултараç. Ăмăрту договăрĕсене кĕске вăхăтлăха тусан, вĕсем мĕнле пурнăçланнине сийĕнчех тĕрĕслесе пырсан, вăл пысăк уса парать.

Епĕ шкулта ăмăрту мĕнле пынине ернерен кайа хăвармасăр йаланах тĕрĕслесе тăнă. Вĕренекен договăрта палăртнă ĕçе мĕнле пурнăçланнине сийĕнчех каласа паратпăр, хавхалантаратпăр, хаваслантаратпăр. Ачана хавасланмасси çинчен уйрăм каласа хăварма. Вăл вĕренӳ ĕçне вăйлăн хăпарта пырать.

Учитĕл кашни ачана пур йĕнчен те пĕлни ĕçре питĕ пысăк уса парать.

Епĕ Бакашĕвăра ĕçленĕ чухне ман Бахмисăва П. йăтăлă ача вĕренӳре кайарах йулса пыратчĕ. Епĕ ăна малтанах пĕлсе ĕлкĕреймен. Унăн урока итлесси начартарах пулнă. Епĕ çакна сиссе, ача сине тимлĕрех пăхма пуçласанах, ман ача отличниксен ретне кĕчĕ. Çавăн пек тĕслĕхсем ĕçре тата нумай.

Учитĕлĕн ĕçĕнче пĕчĕк çитменлĕхсене вăхăтра астуса, вĕсене пĕтерсе пыни ĕçе организацилеме пулăшать. Çавăнпа та учитĕлĕн пур çитменлĕхĕсене те курма вĕренмелеме, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пымала.

Шкул—йалта культурă вучахĕ. Ачасем, йалти ĕççыннисем шкултан нумай пример илеççĕ. Çавăнпа та шкул пуринпĕн те пример парса тăракан çурт пулмала, ытти çуртсенчен хăйĕн кăтартулăхĕпе уйăрăлса тăмала.

Епĕ кăçал урăх шкула куçрăм. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен ман вăл тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле пулчĕ. Епĕ шкула тул йĕнчен те, шал йĕнчен те нумай тирпейлеме тăрăшрăм. Классене штукатурка тутартăм, урайсене, чӳречесене сăрлатартăм. Çавăнпа та шкула кĕме те хавасла. вĕрентме те аван, кĕрсен шкултан тухас килмест.

Ку Çĕнĕ Выçĕлкă йалĕнче те Бакашĕвăри пекех вĕренӳ çулĕ пуçланиччен ачасампе, ача ашшĕ-амăшĕсемпе пухусем туса иртертĕмĕр. Халĕ кунта та ачасем шкула пĕр сиктермесĕр 100 процентĕпех çӳреççĕ, вĕренӳре те лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Çĕнĕ Выçĕлкă шкулне те районра малти вырăна кăларма шанатăп.

Шкул ĕçне туса пынă çĕрте чăрмантаракансем те пур-ха. Акă кăçалхине иккĕмĕш çул ĕнтĕ çителĕклĕ таран учебниксем çук, программăсем çителĕксĕр. Уйрăмăнах пирĕн районра шкул йăпаласене тупма йăвăр. Суту-илӳ организацисем ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Ĕçре нумай чăрмантарăççĕ.

В. С. Кириллăв.

Турхан районĕнчи Çĕнĕ Выçĕлкă пуçламĕш шкул заведующийĕнĕ, ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

ОКТЯБЕР УЙАВЕ УМЕНХИ ĂМĂРТУ

Рубильщиксем тунă ӳсĕмсем

ÇĔМĔРЛЕ. „Болҫевик" савăт коллективĕ Октябрь уйăхне производствăра ӳсĕмсем тунине кĕтсе илет. Октябрьти плана 27-мĕш числа тĕлне 111,3 процент тултарнă.

Ерне уйăраканах рубильщиксем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. 3-мĕш бригадăри Михаил Иемелин йултăш октябрьĕн 27-мĕшĕне 25 тонна вутă вакласа вырăнне 42 тонна вакланă. Çавăн пекех, 4-мĕш бригадăри О. Иегорăв йултăш 47 тонна, Сулимăв йултăш 39 тонна, 1-мĕш бригадăри Орлов йултăш 47 тонна вакланă.

Октябрь уйăвĕ уменхи ăмăрту ытти предприйатисенче те сарăлсах пырать. Комбинатри стахановецсем: Меҫьникăв, Онейĕв, Афонин йултăшсем нормăна 200 процентран кайа мар тултарассĕ. Виҫĕр норма тултаракансем те вуншăран, çĕршĕрĕн шутланаççĕ.

Хар. Лисин.

Срукчен тултаратпăр

ТРАК. Уйăв умĕнхи ăмăртăва чи малтанах Медикасси йалсовечĕ хутшăнчĕ. Ăмăртăва хутшăнсанах йалсовет государства умĕнчи парăмсене парса татас, финанс планне тултарас ĕçсенче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Йалсовечĕ 3-мĕш квартăлти финанс планне 170,6 процент тултарчĕ. Ку паха ĕçшĕн райĕçтăвком йалсоветне куçса çӳрекен Хĕрлĕ йалав панчĕ.

Çавăн пекех 3-мĕш квартăлти финанс планне Тип-Сырма йалсовечĕ 154,7 процент, Тĕрĕр йалсовечĕ 151,7 процент тултарчĕç. Çак йалсоветсем халĕ 4-мĕш квартăлти финанс планне срукчен тултарас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Медикасси йалсовет председательĕ коммунис Капитонăв йулташ 4-мĕш квартăлти финанс планне Аслă Октябрь революцин пулни 21 çул тултарнă уйăв тĕлне 100 процентĕпех тултарма пулчĕ. Халĕ йалсовет хăй çине илнĕ обйазательствăна тултарассишĕн пĕтĕм финанс активне ĕçе хутшăнтарчĕ.

Закамский.

Спирт савăчĕн клубĕнчи кружоксем

Шупашкарти спирт савăтĕнчи клуб çумĕнче драма, хор кружокĕсем тата хĕлĕхлĕ оркестр организацинеле. Художествăлă пултарулăх кружокĕсенче савăтри рабочисем кашни кăçах клуба пухăнса заҫăтнисем туса иртереççĕ. Вĕсем Октябрь уйăвне хĕрсех хатĕрленеççĕ. Драмкружок уйăв кунĕнче „Соловьи поют" пĕеçа лартма хатĕрленет. Хор кружокĕпе хĕлĕхлĕ оркестр çĕнĕ йурăсем вĕреneççĕ.

Н. А.

Йăнăмри шавлă оркестр

Йăнăмри (Тутаркас р.) „Çĕнĕ пурнăç" колхоз çумĕнче 1932 çулта-нна шавлă оркестр ĕçлет. Малтанах ку оркестра ултă çыннă организацинеленĕ. Оркестр çӳлĕри çул ӳссе пырса 30 çынна çитнĕ, вĕсем хушшинче ватă колхозниксем тата 9 хĕрарăм пур. Шавлă оркестра мĕн организацинеленĕренех учитĕл Арсентий Михайлав йĕртсе пырать. Вăл оркестр ĕçне вăйлатассишĕн вăйне хурсах ĕçлет. Хăйĕн пĕлĕвне те ӳстерет. Иртнĕ çултанна Михайлав Мускаври музыка курсĕнче заочнă вĕренет.

Оркестрăн хут купăс, 3 гитарă, мандолинă, кĕсле, 7 балалайкă тата ытти шавлă инструменчесем те пур. Шавлă оркестрăн репертуарĕнче çĕнĕ йурăсем тата авалхи чăваш йурриссем пур. Оркестра тăракансем йурăсене нотă тăрăх вĕреneççĕ. Иртнĕ çул пуртемузыка грамăтине вĕреннĕ. Музыка ĕçне вĕреннине пĕрлех вĕсем оборона ĕçне те вĕреneççĕ, пурте ГСО, ГТО, ПВХО значокĕсен нормисене пани. Хăшпĕрисем значоксем илнĕ те ĕнтĕ.

Талантлă çынсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерме малăла вĕренме кайаççĕ. Акă, кăçал театр-ручилищине Иван Жукав, музыка училищине Анна Смелова вĕренме кĕнĕ.

Шавлă оркестр иртнĕ çулта 31 концерт пани. Кунсăр пуçне чăваш-сен радио саракан станци урлă 14 хут тата Мускаври ВЦСПС станци урлă пĕр концерт пана. Вырăнсенче концертсене тӳлевлĕ лартнине хăйĕн ĕçне вăйлатма 1937—38 çулхи ҫезонра 600 тенке йăхăн укçа пухнă. Оркестра Чăваш республикăнчи Халăх творчествин Çурчĕ 100 тенкĕ, радиокомитет мандолинăпа парса премиленĕ.

Халь вăл Йĕтĕрне районĕнчи Пошнарти драмкружокпа ăмăртса ĕçлет. Кăçал пĕтĕм Сĕвăзари йалхуçалăх выставкине кайма хатĕрленĕ май чылай çĕнĕ йурăсем вĕреннĕ.

Оркестрта тăракансем спектакҫем те лартаççĕ. Иртнĕ çуркунне май уйăвĕнче Мăн Сĕнтĕрте „Нарспи" пĕесăна питĕ аван лартса панă.

Халĕ шавлă оркестр Октябрьти Социализмлă Аслă революцин 21 çул тултаракан уйăва хĕрсех хатĕрленет.

Анчах оркестра ӳссе пыма выранти организацисем пулăшмаççĕ. Инструментсем çителĕксĕр. Колхоз культфондран укçа уйăрса памаçĕ. Çавнашкалах республикăри организацисем та пулăшмаççĕ.

Н. Амурцĕв.

С. АЛЕКÇЕЙĔВ

Испанири троцкисла-шпионла бандăн процесĕ мĕн кăтартрĕ

Испанири ПОУМ текен троцкисла организацин процессĕне Испанири троцкиссен предательле сăтăрла ĕçĕсене тăрă шыв çине каларакан документсене нумай илсе кăтартна. Испанири, çавăн пекех Каталонири тата Баскониря республикăла влаçа вăйпа ишĕлтерре антарас шутпа фашисла пăлхав пуçлансанах ПОУМ пĕрмайăх ишĕлтерĕлĕ ĕç туса пынă. ПОУМ членĕсем пĕрмайăх республикăлă çара тата унăн командованине хирĕç тискеррĕн кĕрешнĕ.

Поумăвĕсем республикăлă Испанин вăртăн ĕçĕсем çинчен пĕлтĕрсе, фашиссене уçăнах пулăшнă. Çапла, вĕсем республикăлă çар Майорка утравĕ çине десант тума кайнă кун çинчен, унта мĕнчухлĕ салтак кайни тата десанта кайакан çар чăçĕн командирĕ çинчен фашиссене пĕлтернĕ.

Мадрид планĕн тепĕр йĕнче, (ана шпионсем туна) республикăлă çарăн генерацăлăй штабăн шифрсен çĕкçинĕ фашисла офицер ПОУМ шпионла организацин пулни çинчен сыринне тупнă.

ПОУМ сотрудникĕсем—Гестапон тата Италин „Овра" охранки агĕнчĕсем ПОУМ-ăн радиостанцине фашиссене тĕрлĕ сведĕнисем пама çул курнă.

Судра ыйтса тĕнченĕ тата вуласа кăтартнă документсенчен судра айăпланакан ПОУМ членĕсем хăйсен „Батальă" хаçатĕнче республикăлă çарсем ăçта тăни çинчен вăрттăн сведĕнисене фашиссене кăтартăвĕсемпе сĕнĕвĕсене йăратман. Стахановла йухăма йĕртсе пыман, уйрăм стахановецсемпе ĕçламен. Çавăн пекех, Читлĕв кадрсене тĕрĕслес тĕлĕшĕнче нимĕн те туман. Вăл клас тĕлĕшĕнчен йӳт çынсемпе, йăла тĕлĕшĕнчен пасалнă, ĕçке йĕрнĕ, патшалăх пурлăхне çарататкан çынсемпе кĕрешес вырăнне, вĕсене савăта, савăтăн аппаратне ĕçе илнисем те пулнă. Ака, нумай вăхăт хушши савăт директорĕнпе бухгалтĕрĕ пулса ĕçленĕ Липатăвах илер (халĕ ăна ĕçрен кăларнă). Вăл нихăçан та йĕркелĕн ĕçламен. Рабочисене улталанă, вĕсен ĕçлекинĕсене нумай пытарса йăлăнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçнĕ, хăшпĕр чухне уйăхĕпе те ĕçре пулман. Анчах çав вăхăтрах Читлĕв ăна ĕç укçи тӳлесе тăнă. Йулашки вăхăтра савăт директорĕнче кассир пулса ĕçленĕ Илларионăван жуликла ĕçĕсем пурне те палла пулнă, анчах ăна Читлĕв кассира илес савăтăн 850 тенкĕ укçине пĕтерттернĕ.

ПСК(б)П райкомĕ Читлĕва савăтри çитменлĕхсемпе ирсĕрлĕхсемшĕн савăт директорĕнчен калapас, тесе йышăннĕ.

Ф. Захарăв.

Редакцирен. Савăтра пулнă çитменлĕхсемшĕн ПСК(б)П райкомĕ ответлă. Вăл ку савăтăн ĕçĕсем йухăнса çитсен тин „çавăрăнса пăхнă", куллен асăрхаса пыни, çитменлĕхсене пĕтерме вăхăтра пулăшни пулман. Çуçалăхлă ĕçсене партилĕ ĕçченчен уйăрма йураманнине парти райкомĕ манма пулмала. Савăтăн ĕçĕсене çывăх вăхăтрах йыса йăнăма мĕн кирлисене пурне те тăвасси парти райкомĕнчен килет.

Пуху аван иртрĕ

Шупашкар районĕнчи „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацинче отчотпа суйлав пухăвĕ аван иртрĕ.

Комитет секретарĕ Самсонăв йулташ хăйĕн отчотĕнче ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен лайăх сӳтатса панă.

Отчот тăрăх пиенче вунă комсомолĕц тухса каларĕç. Тухса калакансем комитет ĕçĕнчи çитменлĕхсене сивĕчĕн критиклесе, малашне мĕнле ĕçлемели çинчен лайăх сĕнӳсем парса хăварчĕç.

М. Алимăв.

Октябрь уйавне хатĕрленеççĕ

** Канаш—Шупашкар чукунçун строительствинче Октябрьти Социализмăла Аслă революцин 21 çул тултарнине уйăлламали план тунă. Уйăв сывхарна майпа пур участкăсенче те Октябрь 21 çул тултарни çинчен, граждан вăрçин геройĕсем çинчен, чукунçул транспортĕнчи чапла çынсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ.

Участкăсенчи çтена хаçат редколлегисем праçник вальӳи çитнех хаçачĕсем кăларма хатĕрленеççĕ.

Уйăв кунĕнче пур участкăсенче те тата строительствă управленинче ачасен утренникĕсем туса иртереççĕ. Вăл утренниксенче художествăлă пултарулăх кружокĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Хаҫ вăл кружоксем тĕрлĕ вăйăсем, йурăсем вĕреneççĕ.

Уйăв тĕлне Октябрь уйавĕ уменхи социализмăлă ăмăрту итогне шута илсе тухаççĕ. Хаҫ бараксенче, пурăннăми вакунсене, столовăйсене тата хĕрлĕ кĕтессене хĕллене вальӳи ăшăтас ĕç пырать.

А. Смышлăйĕв.

** Ҫосакассинчи пуçламĕш шкулта вĕренекенсем (Трак р.) Октябрь уйавĕнче „Таван çĕршывшăн" йăтлă пĕеçă лартма хатĕрленеççĕ, çĕнĕ йурăсем вĕреneççĕ.

В. Иванщков.

Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Тĕп Комитечĕ чĕнсе калани

(ЙУЛАШКИ)

тараймасăр. Мăн кăмăллана сси не, лăпланса ларассине вĕçне çитийех пĕтĕрес пулать, Комсомол речĕсенче чăн-чăн боль шевикла дисциплинă туса хурас пулать, ку вăл— Комсомолăн малалаха çитĕнĕвĕсене тумали тĕн условн. Социализăм строительствин пур участкисенче те тата ытларах пуçарула, ытларах дисциплинăлă пулăр.

Пирĕн „...вĕренмелĕ, вĕренмелĕ, çине тăрса вĕренмелĕ" (Сталин), Марксăн—Енгельсăн — Ленинăн — Сталинăн революцилĕ теорине вĕренсе çитмелĕ, коммунизăма вĕренмелĕ, хамăрăн вĕренĕвĕн, воспитанин кашни утăмне коммунизăмла общăcтва строительствин практикăла ĕçĕпе сыхăнтарса пымала.

„Çамрăксен сойузĕн членĕ пулласси вăл ĕçе çапла туса пымалине пĕлтерет: хăвăн ĕçне, хăвăн вăйăхална пĕлехи ĕçе парас пулать. Коммунисла воспитани çакăнта пулать те ĕнтĕ" (Ленин).

Çамрăксене коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе хамăрăн задачăна малашне тата ытларах ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесе, комсомолри организацилĕ тата политикăла ĕçе ывăнма пĕлмесĕр хăпартса пырас пулать, совет çамрăкĕсемпе сыхăнса тăрассине пур мелсемпе те вăйлатса пырас пулать.

Болъшевикла партин историйĕ пире сакна вĕрентет: çамрăксен массисемпе анлăн сыхăнса тăни пулмасан, çав сыхăнусене пĕрмайăх çирĕплетесе парасси пулмасан, çамрăксене вĕрентме çеç мар, тата унтан вĕренме те хатĕр тăни пулмасан, епĕр малта пыракан совет çамрăкĕсем чăн-чăн массала организацийĕ пулма, ПСК(б)П шанчăклă помошникĕ тата резервĕ пулма пултараймастпăр.

Комсомолĕсемпе комсомолкă йулташсем!

Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Тĕп Комитечĕ Сире ПСК(б)П Тĕпкомĕ хай Ленинла Комсомола саламланинче кăтартса панă йăнăшсене хăвăрт, болъшевикла тăрлетессине пурнăçа кĕртме чĕнсе калать.

Пур çĕрте те, кирек аçта та тата йăланах мухтавлă совет çамрăкĕсем тивĕçлĕ вожаккĕсем пулăр.

Халăх тăшманĕсене тата вĕсен комсомолри агентурине пĕр шеллемесĕр арканса тĕп туса пырăр.

„Ленинла Интернационализăм йăлавне çулĕ тытса пырăр, миршĕн те тата халăхсем хушшинчи туслăхшăн керешĕр, капитализăмла тапăнăва хирĕç хамăр çĕршывăн оборонине тĕреклетĕр, чуралăхпа пуçмăрлăхăн кивĕ тĕнчине çĕмĕрĕр, ирĕкленнĕ ĕçпе коммунисăмăн çĕнĕ тĕнчине тăвăр та çирĕплетĕр, хăвăрăн пĕтĕм ĕçĕрте хăватлă революцилĕ вăй çĕкленĕвне болъшевикла строительсен тимлĕ ĕçлĕхĕпе пĕрлештерсе... пыма пĕлĕр, хамăрăн аннемĕрĕн—Пĕтĕм Сойузри Коммуниспа Партин тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулăр!" (Сталин).

Болъшевикла парти тавра, хамăрăн учитĕл, çулпуçĕ—Сталин йулташ тавра тата таччăнрах пĕтĕçĕр!

Сывă пултăр мухтавлă комсомолла йăру—совет çамрăкĕсем малти отрăячĕ!

Сывă пултăр Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуçăмăр, тусăмăр та учитĕлĕмĕр—асла Сталин!

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ.

ПСÇЛКС Тĕпком Пленумĕн Мускаври общăcтвăлă организацисемпе пĕрле 1938 çулти октябĕрĕн 29-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче йышăннă.

Хасан патĕнчи çапăçусенче пулнисем чаплă та пысăк наградӑпа хавхаланса çĕкленеççĕ

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ Хасан кăлăн районĕнчи çапăçусенче пулнисене наградăсем парасси çинчен кăларнă Указ Совет Инçет-Хĕвелтухăçĕнче бойецсене, командирсемпе политработниксене калама çук вăйлăн хавхалантарса çĕкленĕ.

Октябĕрĕн 31-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕнче ирхине 7 сехетре „Радио тăрăх йулашки хыпарсем паракан" редакци радиотелефон тăрăх Хасан кăлăн районĕнчи застăвасенчен пĕринпе сыхăнать. Вăл вăхăтра Инçет-Хĕвелтухăçĕнче кăнтăрла икĕ сехет пулнă. Аппарат умне Совет Союзĕн Геройĕ кĕçĕн комвзвод И.Д. Чернопятко пынă. Вăл Хасан кăлăн районĕнчи пограничниксен йăчĕпе ĕçсыннисене саламласа сăмах каланă.

— Ĕнĕр чапла та пысăк наградăпӑăн хамăр çĕршыври халăхсене тата партине чĕререн тав тăватпăр,—тенĕ Чернопятко йулташ.— Çак пысăк наградăпӑăн чунтан савăнатпăр, тăван çĕршыва, болъшевикла партине, Сталин йулташа çуламăлăн йуратнине хавхаланатпăр, сталинла заданине пурнăçа кĕртессишĕн—кирек хăш тăшмана та кирек хăш самантра та çапса салатма йăланах хатĕр тăрассишĕн пĕтĕм вăй-хала парăпăр.

(ТАСС)

Ашшĕн савăнăçĕ

ОРЕНБУРГ, октябĕрĕн 31-мĕш. (ТАСС). СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ октябĕрĕн 25-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх политрук заместительне Сергей Никанорăвич Бамбурăва Совет Союзĕн Геройĕ йăтне панă. Сергей Никанорăвич ашшĕ-амăшĕсем Сок-Кармелинск районĕнчи Ворошилова йăлĕнче пурăнаççĕ. Хăйсен земăкĕ награда илни çинчен радио тăрăх пĕлсен герой сураллă йал сыннисем унăн ашшĕ-амăшне сывлăх сунса саламланă.

Герой ашшĕ Никанор Леонтийевич Бамбурăв митингра çапла туха калана:

— Ĕнĕ—ватă сын, 62 çула çитнĕ ĕнтĕ, анчах епĕ хăлăхи. пак телейлине хаваслăх халиччен нихçан та курман. Манăн Сергейе—ĕлĕк чухăн пулнă сынăн ывăлне—Ленин орденĕпе наградăланă, вăл Совет Союзĕн Геройĕ йăтне илнĕ. Ывăлăма награда панăшăн епĕ партине, правительства тата тăван Сталин йулташа хĕрӳлĕн тав тăватăп.

Герой йăлĕнчи сынсем Сергей Никанорăвича сывлăх сунса саламлă çыру йăнă. Колхозниксем хăйсен земăкне тăван колхоза пырса курма чĕнеççĕ.

Мускав облăçĕнчи 1.500 колхозник уйăх иртерме столица пыраççĕ

Мускав облăçĕнчи районсенчен 1500 колхозник Октябĕр уйăвне иртерме столица пыраççĕ. Хăнасенчен нумайĕшĕ ССР Союзĕн орденĕсемпе наградăланă палла сынсем. Нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче столицăри Колхоз площадьĕнче митинг пулса иртет. Чи лайăх колхозсене Хисеп Хăми сине сырса хураççĕ. Нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче колхозниксем Хĕрлĕ площадьĕре Мускаври демонстрацире пуласçĕ.

(ТАСС).

СОВЕТ СОЙУЗЕ ТĂРĂХ

** Томскра, революцин çулăмлă трибуне С. М. Киров пурăнна çуртра, музей организацилеççĕ. Пухнă документсем Киров йулташăн Томскри ĕçĕсене—вăрттăн типографи организацилени, студентсем хушшинче ĕçленине т. шт. кăтартса параççĕ.

** Октябĕрĕн 31-мĕшĕнче, М. В. Фрунзе вилни 13 çул тултарнă кун, Шуйă хулинче Фрунзе йăчĕпе пысăк выставка уçăлат. Кунта чаплă революционер Шуйă тата Иванава текстильщикĕсем хушшинче 1904—1907 çулсенче ĕçленине кăтартакан документсемпе фотографисем нумай пухнă.

** Октябĕрĕн 30-мĕшĕнче Сталинградри Сталин йăчĕпе тăракан електростанцине 100 пин киловатт вăйлĕ çĕнĕ турбинăна хута йăрса пăхнă. Турбина чаплă ĕçлет. Турбина оборот тата усăлă коефициент тĕлĕшпе Ивановăпи пур турбинăсенчен те иртсе кайат. Турбина вăйĕ икĕ Волховстроя вăйĕ чухлĕ.

(ТАСС).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сылтăмран сулахайала)—„Родина" самолъотăн 2 мĕш пилочĕ капитан-орденоносец П.Д. Осипенко тата штурманăслă лейтенант орденоносец М.М. Расковă Мускав çывăхĕнчи Медвежйе кӳлли хĕррине канна вăхăтра (1938 ç. çĕртăвĕр уйăхĕнче ӳкернĕ).

Н. Радьцевич фото-ӳкерчĕкĕ (Совэкфото).

Гризодубăвă, Осипенко, Расковă йулташсен вĕçевне Пĕтĕм Сойузри рекорд тесе йышăннă

Виçĕ паттăр совет хĕрарăмĕн—Гризодубăвă, Осипенко, Расковă йулташсем „Родина" самолъот çинче нĕр чăранмасăр тӳрĕ вĕçсе 5.908 километр та 610 метр кайнă.

ССР Сойузĕн Косарĕв йăчĕпе тăракан Тĕп Аэроклубăн авиацине спорт комиссăи президиумĕ „Родина" самолъот екипажĕ пĕр чăнмасăр инçете тӳрĕ вĕçнине Пĕтĕм Сойузри рекорд тесе йышăннă. Комиссăи пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕ (ФАИ) умне çак вĕçеве, хĕрарăмсем çĕр çине ларакан самолъотсемпе инçете вĕçсе тăвакан пĕтĕм тĕнчери рекорд выпăнне хурса çирĕплетме ходатайсăа тăратмала туна.

(ТАСС).

Узбекистанри колхозсен тупăшĕ 300 мĕлйун тенне çитет

Узбекистан уйхирĕнче çĕрмамăкне йăлтах пухса кĕртмен-ха. Çапах та, республикăра государственăна çĕрмамăкĕ парас плана тултарнă колхозсем çĕршĕвĕн шутланаççĕ. Колхозсен государствăна банкĕсенчи счочĕсем çинче уçса шучĕ калама çук пысăкках ӳссе пырат, колхозсен тупăше 300 мĕлйун тенне йăхăн шутланат. Çак уçса пĕтĕмпех государствăна çĕрмамăкĕ тата йăлхуçалăхĕнчи ытти продукцисене парса илнĕ тупăш пулса тăрат.

Ленин районĕнчи „Сталинчи" йăлхуçалăх ертелĕ, малтанласа шутланă тăрăх, кăçал 7 мĕлйун тенкĕ тупăш илнĕ. Пĕр Пахта—Абадск районĕнче кăна мĕлйуншар тупăш илнĕ колхозсем 32 шутланаççĕ.

Республикăри колхозсене, çĕрмамăкĕ тăратас плана иртерсе тулгарнăшăн, государства преми шучĕпе хушса 151 мĕлйун тенкĕ панă.

(ТАСС).

Китайри вăрçа

Пĕр вăхăтра пекех Китайăн икĕ пысăк хулине—Центр Китайра Йăнцзы йăханшывĕн çыранĕ çинчи Ханькоуна тата Кантăр Китайра Кантона туртса илсе, йăпонĕсем Кантон-Ханькоу чукунçулĕ тăрăх икĕ йĕнчен наступлени туса пыма пуçланă. Çак чукунçул тăрăх Кантонран çурçĕр йĕнне, Ханькоуран кантăр йĕннеле наступлени туса пырса, йăпонĕсем ана пĕтĕмĕшпех туртса илме, çапла майпа вара Кантăр тата Центр Китайăн темиçе провинцине татса илме тăрăшаççĕ.

Халăхи вăхăтра Центр Китайри Кантон-Ханькоу чукунçулĕ çинче Çаоганьи станци сывăхĕнче çапăçусем пыраççĕ, унта Китай çарĕсем йăпонĕсене хирĕç вăйлăн çине тăрса çапăçаççĕ.

Кантăр Китайра Йăпони чăçĕсем Гуандун провинцине шалала кĕрсе пыраççĕ. Йăпонин 1000 çынран тăракан пĕр колоннине Кантонран çурçĕр йĕнне 100 километрта, Ланькоу хули патĕне, китайăсем вăйлăн та хăйаррăн çапăса кĕтсе илнĕ. Йăпонĕсен 300 çын ытла пĕтнĕ, вара йăпонĕсем кайала çăвăрăнса, кĕвелăнăç йĕнпеле, Фоган хули патнеле чакса кайнă.

Çурçĕр Китайра, Хеньаньпровинцин кантăр-хĕвелтухăç пайĕнче Китай çарĕсем йăпонĕсене Гуши хулинчен хĕссе кăларнă. Гуши икĕ уйăх ытла йăпонĕсен аллинче пулнă.

(ТАСС).

ССРС тусĕсен Франции ассоциацин сиесĕ

Октябĕрĕн 30-мĕшĕнче Франци Лион хулинче ССРС тусĕсен Франции ассоциацин сиесĕ уçăлнă. Сиеса 430 çын пынă. Вĕсем Франци тата унăн çурçĕр Африкăри районĕсенчен пуринчен те пухăннă. Çавăн пекех сиеса ССРС тусĕсен Англири тата Швейцариири ассоциацисен представительĕсем те пынă.

Совет Союз тусĕсен Франции ассоциацийĕ халăхи вăхăтра хăйĕн ретĕнче 80 пин çынна пĕрлештерсе тăрат. Кунсăр пуçне, ассоциаци çумне пĕрлешекен организацинче икĕ мĕлйун çынна йăхăн тăрат.

Сиесăн ларăвĕнче ССРС тусĕсен ассоциацин генерал̆ăй̆ăн секретарĕ Грейе доклад туса панă. Вăл хăйĕн докладĕнче Франции Совет Союзĕ пĕр-пĕрне пулăшас йĕнепе тунă договăр çинчен чăрăса тăрса, вăл договара хӳтлеме кирли çинчен калана. Унтан вăл Совет Союзне иевропăри ларутăрупа сыхăнна ыйтусене сӳтсеявас ĕçрен пăрса хăвармала мар, тесе кăтартса панă.

Сиесра Франции Совет Союзĕ хушшинче тунă договăра хӳтлесе радикал-социалист Родольф Арто тата ĕç министрĕ пулнă социалист Февриле тухса каланă.

(ТАСС).

Германи фашисăмĕ Испанине çаратаҫ

Испанин пăлхавçасем йышăннă районĕсенче фашисла Германи хуçа пулса тăни çинчен Парижрен çапла пĕлтерĕççĕ: пăлхавçасен районĕсенчи Германи промышленнăçĕпе конкуренци тума пултаракан предприятисене пурне те ĕçлеме чарса лартнă.

Испани продуктисене Германине ăсатасси куран кунах ӳссе пырат. Баскеси облăçĕнче кăларакан мĕнпур тимĕр тăпринчен çурри Германине кайат. Басканири металлурги Германине тимĕр тата хурçа тăратат. Германине цемент ăсатасси те ӳссех пырат.

Çавăн пекех, çусем, аш-какай, тир, пахча-çимĕçĕ, тырă, сахăр тийенĕ пăрахутсем йăланах Германине кайса тăраççĕ, çав вăхăтрах Испанири пăлхавçăсем йышăннă районсенче пуранăкансем выçă лараççĕ.

(ТАСС).

Вулав çурчĕсемпе библиотекăсенче ĕçлекенсене вĕрентсе хатĕрлес ĕç

Кăçал Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йăлăнчи вулав çурчĕсенче тата районсенчи клубсемпе библиотекăсенче ĕçлекенсен квалификацине ӳстерес ĕнĕпе тĕрлĕ курссемпе семинарсем туса иртерĕç. Çеҫтăвĕр—октябĕр уйăхĕсенче, вулав çурт пуçлăхĕсен курсĕнчен 40 çын вĕрентсе кăларнă. Тĕрлĕ курссем урлă пĕтĕмпе 84 çын вĕрентсе хатĕрленĕ.

Çавăн пекех курссем 1939 çулта та туса иртерме палăртнă.

Икĕ сехет хушшинче 2000 кĕнекене йăхăн сутнă

Ĕнер Шупашкарти кĕнеке магазинĕнче Пĕтĕм Сойузри Коммунисен (болъшевиксен) Парти историйĕн ПСК(б)П Тĕп Комитет Комиссăинĕ редакцилесе кăларнă учебникне сутрĕç. Вăл учебник Шупашкара 1970 экземпляр килнĕ пулнă. Кашни ĕçсыннишĕн питĕ те хакла кĕнеке икĕ сехет хушшинче йăлтах сутăнса пĕтнĕ.

ПСК(б)П историйĕн учебникĕ пирĕн республикăна мĕн пурĕ 8000 экземпляр килнĕ. Вăл тултăн 6000 экземплярне ĕнерех районсем тăрăх салатнă. Вăл кĕнекене çак кунсенчех пур районсенчи кĕнеке магазинĕсенче те сутаççĕ.

— o —

Йармăрнă уçăлнă

Октябĕрĕн 31-мĕшĕнче, Шупашкарта, Чапаевски посолăкра Октябĕр уйăвĕ умĕнхи йармăркă уçăлнă.

Шупашкарти суту-илў организацийĕсемсĕр пуçне, йармăркăна çыхăхри районсенчи суту-илў организацисем, промертелсем те килнĕ.

КОГИЗ йармăркăра кĕнекесĕм сутакан ларăпкă уçнă, „Красный кустарь" мастерской пуçа тăхăнмали йăпаласем ларăпкине уçнă.

— o —

Ертелĕн çĕнтерĕвĕ

Кивĕ Ейпеçри (Турхан р.) вăрманпромертел Октябĕр революцин 21 çул тултарна уйăва пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Ертел-1938 çулти производствă планне 168,7 процент тултарна. Уйăрман илсен, 9 уйăх планне ертел (председательĕ Васильйев йулташ) 205 процент, 3-мĕш квартал планне 304 процент таран тултарнă.

— o —

СУД

Спекулăнтсем

Канашри хатĕрлев кантурĕнче ĕçлекен агентсем Кутăв Куçма, унăн ывăлĕ Кутăв Иван-тата Немăн Иван хăйсен выраннă ĕçсемпе усă курса 1933 çултанпах аш-какайпа, краскăпа, чашăк-тирĕксемпе спекулăци туса пурăннă.

Вĕсем хатĕрлев кантурĕнчен илнĕ удостоверенипе усă курса тавăрсене уйăрăм çынсене сутнисĕр пуçне тĕрлĕ организацисене—буфетсене, столовăйсене аш-какай тăратса тупăш илнĕ.

Çак ĕçе Канаш хулинчи халăх судĕ пăхса тухса, Кутăв Куçмана 8 çуллăх, Кутăв Ивана 5 çуллăх, Немăв Ивана 6 çуллăх тĕрмере хупса усрамала турĕ.

Й. Степанăв.

ХРОНИКĂ

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ конструкторсем—Поликарпăв, Архангĕлски тата Иль̆ушин йулташсем çĕнĕ типла самолъотсем конструкцилесе тăвас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунине палăртса, вĕсенчен кашниех 100-шер пин тенкĕ укçа тата пĕрер „ЗИС" автомашинă преми пама йышăннă.

(ТАСС).

Пĕлтерни

Пайан, нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче, кăçхине 6 сехетре, ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшас майпа педагогика институчĕн директорĕ Нейман йулташ „Плехановăн народниччăвăна кĕрешни тата унăн вăл тапхăрти тĕп ĕçĕсем мĕнле выраи йышăнса тăни" темăпа лекци туса парат.

Парти вĕрентĕвĕн çурчĕ.

— o —

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕн" октябĕрĕн 12-мĕшĕнче тухнă номерĕнче „ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн" 1-мĕш сыпăкăн 3-мĕш уйрăмĕнче, 3-мĕш колонкăн малтанхи абзацĕнче: „Çак саккуна кăларсан ĕç кунне пӳлни пулман" тесе йăнăш пичетленĕ. Ана тӳрлетсе çапла вуламала: „Çак саккуна кăлариччен ĕç кунне пӳлни пулман".

Ыраш калчи çинчен

ИКĔ ПĂРУ ТЫТСА КĔНĔ —

пĕри виçĕ сухăн, хĕрлĕ, пуçĕне хырăмĕ шурă, тепри 1,5 султа, хĕрлĕ.

Пăрусем патне çак адресне пымала: Колхоз им. 14-летия Октябрьской революции, дер. Голодяевка, Голодяевского сельсовета, Чебоксарского района.

Шупашкарти Водопйанăн йăчĕпе тăракан тир-сăран комбинатне

план пайăн начальникĕ, ĕç тата ĕçкĕн тăрăх ĕрлекен экономист, бухгалтĕрсемпе счетоводсем

КИРЛĔ.

Тир-сăран комбиначĕн кантурĕнчен çак адресне ыйтса пĕлмелĕ: г. Чебоксары, ул. Ворошилова, д. № 27. ДИРЕКЦИ.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Халь те çĕрулии кăларса пĕтермен

ЙĔТĔРНЕ. Балдай колхозĕ йăлхуçалăхĕнче пур ĕçсемне те кайа йулса пырат. Пайăнхи куна колхозра çĕрулми те кăларса пĕтермен. Государствăна умĕнчи обязательствăна тултарасси çинчен халь сăмах та пымасăр. Ĕç кайа йулса пынни сăлтавне бригадирсем ĕç вăйĕ ситменни çине йăвантарма пăхаççĕ. Сăлтавĕ унта мар, ĕç вăйĕне тĕрĕс усă курма пĕлменнинче, ĕçе тăрашса туманнинче. Çĕрулмине октябĕр уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех кăларса пуçтарма май пулнă, пĕтĕм ĕç бригадирсем хăйсем ĕçе çӳременнине кайа йулна. Районри çĕрĕç пайĕ пирĕн колхоз мĕнле ĕçленине пачах интересленмест.

М. Рыбаков.

— o —

Çак кунсенчех плана тултармала

Иртнĕ пилĕккуналăха Елĕк районĕ государствăна çĕрулми тăратас ĕнĕпе хăнăр уншăну турĕ пулнă те, уйрăм йăласенче çĕрулми хатĕрленĕ ĕçе ниче сӳреймекĕн пырат. Паянхи, Сулавăç йăласенчĕсене илсен, вĕсем çĕрулми хатĕрлев планне 50 процентран мала тултарайман. Шумшваш йăласовет̆ĕнчи „Сила"-колхоз çĕрулми нама тытăнман: правлени председательĕ Филиппăн йулташ государствă умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарассинчен пĕрре те тăрăшмасть. Виçĕ уйăх хушши енĕ колхозниксен пухăнăвĕ пулман. Кăçалхи тунăпаран ĕçкунĕ тăрăх колхозниксене 6 пин тенкĕ валеçсе памала пулнă пулсан, Филиппăн йулташ укçа-тенĕне хай пĕлĕ пек тытаканнине, 400 тенкĕ йăхăн ĕç хăварна.

Октябĕрĕн 25-мĕшĕнче пулнă пухура колхозниксем Филиппăн йулташăн ситменлĕхĕсене нумай кăтартса пăрса тинкерчĕс. Пуху государствăна умĕнчи обязательствăсене сак кунсенчех, Октябĕр уйăвĕн пĕтĕмпех тултармала, тесе хăварчĕ.

Т. А.

— o —

1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

(Нойабĕрĕн 1-мĕшне)

1. Улатăр	66,7	процент
2. Елĕк	78,0	„
3. Патăрйел	36,7	„
4. Варнар	65,1	„
5. Йĕпреç	44,6	„
6. Ишлей	55,0	„
7. Канаш	27,0	„
8. Кусланкка	41,8	„
9. Хĕрлĕ Чутай	28,1	„
10. Кувакина	24,6	„
11. Сĕнтĕрвăрри	46,0	„
12. Парачкав	21,7	„
13. Турхан	54,6	„
14. Тутаркас	89,0	„
15. Трак	50,3	„
16. Вăрмар	27,3	„
17. Çĕрнӳ	29,9	„
18. Шупашкар	56,7	„
19. Шăмăршă	28,2	„
20. Шахасан	64,8	„
21. Шăнкăртам	76,5	„
22. Çĕмĕрле	25,2	„
23. Йĕтĕрне	57,3	„
24. Иелчĕк	54,2	„
25. Тăвай	61,51	„

Республикĕпе 48,0 процент.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Тĕп Аптекă Управленин Чăваш республикинчи уйрăмĕн аптекисенче тата санитарипе гигиенă магазинĕсенче пуринче те сутлăх çакăн пек

ЙАПАЛАСЕМ ПУР:

Пулă çăнĕ, витаминлă (ракитран), пирамидон тата фенацетин (пуç ыратнинчен), ачасене витаминлă çăнăх, фруктăсенчен тунă тĕрĕнĕн шăршлă ессенцисем, хуçалăхра тытăкламали тата чирлĕ сынна пăхмали йăпаласем.

Йышлă ассортиментлă парфюмери, косметикă тата туалетнăй сутăнăçсем сутлăх килчĕç.

ЧĂВАШАПТЕКОУПРАВЛЕНИ.

Шупашкарти „Кооператор" ертелă производствăда бухгалтерине пĕлекен

АСЛĂ БУХГАЛТĔР

васкавлă кирлĕ.

Ĕçчçи—килешӳ тăрăх, хватер параççĕ.

ПРАВЛЕНИ.

2—2

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" СЫРАНСА ИЛМЕЛИ ҪАКСЕМ ПЕР УЙĂХА 2 Т. 50 П., 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., СУЛТАЛАКА 80 ТЕНКЕ, ПОДПИСКАНА СЫХЛАМЛ УПРАВЛЕНСЕМ, ПИСМОНОСЦЕСЕМ ЙЫШАНАССĔ.

Уполномоченный Чувашгиздата № 559 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мост прома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58×84 в. л.